Чув. Ш-1877
3-27

Раççей Хветератсийĕн Сотсиалисâмпа Канаш Респупликê

# Р. Х. С. К. Р.

# ÇĔР КОТЕКСИ

Тĕпĕçтăвкомăн IV-мĕш çеççийĕ 1922 çулта йупа уйăхĕн 30-мĕшĕнҫе йышăнса çирĕплетнĕ

*Урхи Н.* куçарнă

ҪĂВАШ ОПЛĂÇĔНҪИ
КĔНЕКЕ КĂЛАРАКАН УЙРĂМ
ШУПАШКАР □ 1923.

# Куçаракантан.

Епĕр Раççей Респупликĕн Çĕр котексине ђăвашла куçарма хамăр çийе илсе куçарса пĕтертĕмĕр, халĕ вăл тухрĕ ĕнтĕ. Епĕр тунă ĕçре кăлтăксем, йакамар вырăнсем, ăнланма йăвăр вырăнсем, тата ыттисем те нумай пулĕ. Хăш çĕрте çĕнĕ сăмахсем те пур. Çавсем нумайшĕсене кăмăла каймĕç. Анђах пирĕн вĕсенђен пăрăнса иртсе кайма пулмарĕ. Саккун çырасси пит йăвăр йапала, ăна куçарасси те çăмăлах мар. Çитменнине тата пирĕн ђăвашсен сăмахсем çитмеççĕ, çавăн пирки татах йăвăрланат. Саккунăн кашни сăмахне, кашни сăмахçавăрнăшне тĕрлĕ йенђен, тĕрлĕ майлă сўтсе йавса пăхмалла. Ăна пĕђђен мар, темиçе çын пĕрлешше куçармалла. Пирĕн çын сахал пирки апла пĕрлешше куçарасса кĕтсе тăмалла пулмарĕ. Мĕлле куçарнă пулсан та, вырăсла лайăх пĕлмен çынна ђăвашла вырăслинђен ытларах ăнлантарса парĕ, ăна ăнланма çăмăлтарах пулĕ терĕмĕр. Çав пирĕн ĕмĕт çитсен, епĕр куçарни харамах каймĕ тетпĕр.

Ăнланайман стаťйасене çырса йама ђĕнетпĕр, „Канаш“ хаçат урлă ăнлатарса пама тăрăшăпăр.

*Урхи Н.*

Шупашкар хули,
Ака уйăхĕн 19-мĕш кунĕ,
1923 ç.

Областлит № 12. Чебоксары. Печ. 3000 экз.

Типография Чувашгосиздата.

*Пĕтĕм тĕнчери пролеттарисем, пĕрлешĕр!*

# Пĕтĕм Раççейри Ĕçтăвакан Тĕп Комиттет Çĕр котексине ĕçе кĕртесси çинчен тунă постановлени.

(Тĕпĕçтăвкомăн 4-мĕш çеççинче 1922-мĕш çулта, йупа уйăхĕн 30-мĕшĕнче йышăннă).

Пĕтĕм Раççейри Канашсен 9-мĕш Сиесĕ çĕр тĕлешĕпе тунă постановленийе вырăна кĕртес тесе, пĕрмайах Ĕçлекенсемпе Хресченсен патшалăхĕн аллинче çирĕп тăракан çĕрпе усă курас йĕркене тĕрĕслетес, çирĕплетес, хуçайства условисем майлă тăвас тесе, Пĕтĕм Раççейри Ĕç Тăвакан Тĕп Комиттет çапла тăваҥ:

1. Раççей Хветератсийĕн Сотсиалисăмпа Канаш Респупликĕн Çĕр котексине çирĕплетет, 1922-мĕш çулăн раштав уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа ĕçе кĕртме, вăл Котексăна пĕтĕм Р.Х.С.К. Респупликĕ территторипех сарма хушаҥ.

2. Çĕр тĕлĕшĕпе çак Котексă тухиччен тухнă саккунсен, халĕ Котексăна кĕнисен, тата çав котексăна хирĕç пыраканнисен Çĕр котекси тухнă хыççăн вăйĕ пĕтет.

3. Ахтономилле респупликсемпе оплăççенчи вырăнти условисене кура Çĕр котексине тӳрлетмелле пулсан, ăна Тĕпĕçтăвком тӳрлетет, мĕн тӳрлетмеллине Хветерачни Комиттетăн 1923-мĕш çулти нарс уйăхĕн 15-мĕш кунĕнчен кайа йулмасăр Тĕпĕçтăвкома тăратмалла.

4. Р.Х.С.К. Респупликне кĕрекен пур канаш респупликĕсен Çĕр Комиссариачĕсем çине патшалăх пурлăхĕн çĕрĕсене шута илме, вĕсене çырса тухса оппĕçне тума ĕç хураҥ; 1923-мĕш çулти çу уйăхĕн 1-мĕш кунĕнчен кайа йулмасăр патшалăх пурлăхĕн çĕрĕсен спискине çирĕплетме Тĕпĕçтăвком Преçитиумне тăратмалла. Çавăнпа пĕрлех Çĕрĕç Комиссариачĕсене çав çĕрсене васкаса йĕркене кĕртме, тата çитес çура вĕсен чиккисене туса пĕтерме хушаҥ.

5. Р.Х.С.К. Респупликне кĕрекен пур канаш респупликĕсен Патшалăхри Ĕççен Комиссариачĕсемпе Çĕрĕç Комиссариачĕсен оркăнĕсене промышлĕннăç ĕçĕсене туса тăракан йышлă пролеттариатлă хуласене çитес вăхăтра çĕр касса па-

ма хушаҫ. Ҫав комиссариатсем пӗрле списӑк тӑратнӑ тӑрӑх ҫавнашкал хуласен спискине тума Р.Х.С.К. Респупликӗн Халӑх Комиссарӗсен Канашӗ ҫине ӗҫ хураҫ.

6. Ахтономилле канаш респупликӗсемпе оплӑҫҫӗн территтори тӗлӗшӗнҫен пулакан ҫӗр тавлашӑвӗсене, ҫак Ҫӗр котексин 220-мӗш статйинҫе кӑтартнисене татса парас ӗҫе, тата ҫав респупликсемпе йунашар кӗпӗрнесен, оплӑҫҫӗн ҫикӗри ҫӗрсем тӗлӗшӗнҫен пулакан тавлашусене татса парас ӗҫе Ҫӗр тавлашӑвӗсен Аслӑ Контролӗн Коллекийӗ (Особая Коллегия Высшего Контроля) ҫине хураҫ; ҫак ӗҫ пирки Хветераҫни Комиттетран пултаруллӑ сасӑпа (решающий голос) икӗ претставиттӗл кӗреҫҫӗ, вӗсене Тӗпӗҫтӑвком Преҫитиумӗ ҫирӗплетет.

7. Ахтономилле канаш респупликӗсен территторинҫи ҫӗр ҫине, йе вӗсен территторинҫи ҫӗрсенҫен куҫҫа ларас ӗҫе Тӗпӗҫтӑвком Преҫитиумӗ уҫҫа параҫ, ҫарса лартаҫ, мӗлле йӗркепе, условисемпе куҫҫа лармаллине Хветераҫни Комиттет тӑратнӑ тӑрӑх вӑлах тӑваҫ.

8. Ҫӗрпе усӑ курассинпе ҫӗрйӗркелӳ ыйтӑвӗсем вӑрман хонҫӗпе усӑ курассин условийӗсемпе, йӗркисемпе пит хытӑ пӗтӗҫҫе тӑнине шута илсе, Ҫӗрӗҫ Комиссариаҫӗ ҫине Вӑрман котекси хатӗрлеме хураҫ, вӑл котексӑ Ҫӗр котексин малалли пайӗ пулаҫ, ӑна вырӑнсене сӑлатса ырлаттармалла та, Тӗпӗҫтӑвкомӑн пулас ҫеҫҫинҫе пӑхса тухса ҫирӗплетме кӗртмелле. Ҫав котексӑ ҫинҫе патшалӑх вӑрманӗсемпе халӑх вӑрманӗсене тытса тӑмалли йӗркене те, вӑрман ҫӗрӗсене йалхуҫайстви тӗлӗшӗнҫен вӑхӑтлӑха, йе пӑрмайах усӑ курмалла мӗлле йӗркепе тумаллине те тӗплӗн кӑтартмалла.

9. Ҫак Котексӑна ӗҫе кӗртнӗ ҫухне ҫӗр оркӑнсене кӑтартакан правӗлсем, инструксисем, постановленисем кӑларма Ҫӗрӗҫ Комиссариатне правӑ панӑ, ахтономилле канаш респупликсен тӗлӗшӗнҫен вӑл правӑ Хветераҫни Комиттетӑн пур.

Тӗпӗҫтӑвком претҫетаттӗлӗ *М. Калинин.*

Тӗпӗҫтӑвком ҫекреттарӗ *А. Йенуккитҫе.*

Мускав, Кремӗл. Йупа уйӑхӗн 30-мӗш кунӗ, 1922 ҫул.

# РХСК Респупликĕн Ҫĕр котекси.

*Тĕпĕҫтăвкомăн 4-мĕш ҫеҫҫийĕ 1922-мĕш ҫулта йупа уйăхĕн 30-мĕшĕнԏе ҫирĕплетнĕ.*

## Тĕп йĕркесем.

1. Пĕтĕм Раҫҫейри Ĕҫлекенсен, Хресԏенсен, тата Салтаксен Теппуттаԏĕсен Сиесĕсем ĕҫлекенсенпе хресԏенсен револютсилле ирĕкĕ уҫҫăн кăтартнă тăрăх тунă постановленисем Раҫҫей Респупликĕнԏи ҫĕрсем, ҫĕр айĕнԏи пуйăнлăхсем, шывсем, вăрмансем кашни ҫыннăн харпăрлăхĕ пулса тăрассине ĕмĕрлĕхех пĕтереҫҫĕ.

2. Р. Х. С. К. Респупликĕнԏи пур ҫĕрсем те, вĕсем кирек кам аллинԏе пулсан та, Ĕҫлекенсенпе Хресԏенсен Патшлăхĕн пулса тăраҫҫĕ.

3. Йалхуҫайстви ĕҫне туса тăмалли ҫĕрсем, йалхуҫайстви происвотстви туса усă курма май пур ҫĕрсем пурте патшалăхăн ҫĕр хонԏĕ пулса тăраҫҫĕ; вăл ҫĕр хонԏне Ҫĕрĕҫ Комиссариаԏĕ, тата унăн вырăнсенԏи оркăнĕсем пăхса тăраҫҫĕ.

4. Патшалăхăн ҫĕр хонтĕнԏи йалхуҫайстви ĕҫĕсем туса тăмалли ҫĕрсемпе саккун йĕркисем тăрăх: а) хăй вăйĕпе ҫĕрĕҫлесе тăракан ҫынсене, ҫĕрĕҫлесе тăракан пĕрлешӳсене (об'единения); б) хулари ҫынсене, тата в) патшалăх уԏрештенисемпе претприаттисене тӳрех усă курса тăма правă параҫҫĕ. Ҫапăнта калана ҫынсемпе уԏрештенисем тӳрех усă курса тăман ҫĕрсене Ҫĕрĕҫ Комиссариаԏĕ тытса тăрат̆; вăл ҫĕре опԏăсене, уԏрештенисене, орканисатсисене, тата уйрăм ĕҫлесе тăракансене усă курма ăрасна постановленисем, условисем тăрăх параҫҫĕ.

5. Уйрăм ĕҫлесе тăракансене, пĕрлешпе ĕҫлекенсене, хуласене, хула манерлĕ йалсене панă хыҫҫăн патшалăхăн ҫĕр хонтĕнԏе йулнă ҫĕрсем пурте патшалăх аллинԏе тăраҫҫĕ, вăл ҫĕрсем патшалăх пурлăхĕ ҫĕрĕсем пулаҫҫĕ.

6. Ҫĕр оркăнĕсем, ҫĕр опԏисем аллинԏе тăракан ирĕклĕ ҫĕрсемпе (саппас тăраканнисемпе, тата никам усă курса тăманнисемпе) мĕлле йĕркепе, мĕлле условисемпе усă курмаллине, тата тĕрлĕ ҫынсене, уԏрештенисене мĕлле ԏеретпе памаллисене ăрасна правĕлсем кăтартса параҫҫĕ, вăл правĕлсене Ҫĕрĕҫ Комиссариаԏĕ кăларат̆.

7. Ҫĕрĕҫне ҫĕр опԏисем аллинԏи ҫĕр ҫинԏе туса тăракансем те, патшалăх усă курма панă ҫĕр ҫинԏе туса тăракансем те, ҫĕр оркăнĕсен контроԓне пăхăнса тăраҫҫĕ, хăйсене панă ҫĕртен йĕркеллĕ усă курас тĕлĕшĕнԏен ҫак Котексă, тата ытти саккунсем хунă ĕҫҫене (обязанности) туса тăма пулаҫҫĕ.

8. Ҫĕрпе усă курас правăсене, тата вăл правăсем ҫĕрпе усă куракансем ҫине мĕн хунине Р. Х. С. К. Респупликĕн саккунĕсем, ҫак котексă, ăна ăнлантарас, хушас тĕлĕшпе тухнă саккунсем, ҫĕр опԏисен прикăвăрĕсем, вырăнти йăласем (саккуна хирĕҫ пыманнисем) кăтартса тăраҫҫĕ.

### I-мĕш пай.

# Çĕре ĕçлесе усă курасси.

### I-мĕш уйрăм.

## Çĕрпе усă курмалли правă.

9. Р. Х. С. К. Республикĕнҫи çынсем, çĕре хăйсен аллипе ĕçлесе тăрас текеннисем, пурте йалхуçайстви ĕçĕ туса тăма çĕр илме пултараççĕ, вĕсен курин те правă пур. Ку тĕлĕшрен арçыннĕ, хĕрарăмĕ те, кирек мĕнле тĕнли те, кирек мĕнле халăх çынни те пĕр тан. Çĕрпе усă курас текенсем вăл çĕре йе хăйсем тăракан çĕр опҫинҫен илеççĕ, йе çĕр оркăнĕсем аллинҫе ĕçлесе усă курмалли саппас çĕр пулсан,—вĕсенҫен илеççĕ.

10. Çĕрпе усă куракан хăйне панă правăпа а) çĕр опҫинҫе тăрса, çав опҫă çĕрпе мĕлле майпа усă курмалла тунă йĕркене пăхăнса, йе б) çĕропҫинҫе тăмасăр халăхран уйрăм ĕçлесе тăрса усă курма пултарать.

11. Çĕрпе усă курма панă правăн срокĕ çук; вăл правăна саккунта кăтартнă йĕркесем тăрăх анҫах пĕтерме пултараççĕ.

12. Çĕрпе усă курмалли правă çапла майсемпе усă курма ирĕк парать: а) çĕре пĕр вырăнта, йе темиçе вырăнта уҫаскăн кастарса илме (куттăр, отруп, тĕрлĕ вырăнта анан кастарса илме), б) опҫă çĕрĕнҫен хăйне тӳпе илме, тата в) халăхăн ĕçлеме йурăхлă çĕрĕсемпе халăхпа пĕрле ĕçлесе усă курма.

13. Акса, çулса тăракан çĕр çине тупăшлу савăҫĕ тавраш лартма уйесри çĕр оркăнĕсем ирĕк парсан анҫах йурать.

14. Çĕнĕ çĕр уҫаскисемпе усă курма а) çав уҫаскăсене çĕр оркăнĕсем касса парсан; б) опҫăсем çĕр парсан, тата в) ирĕк çĕрпе усă курма илсен правă параççĕ.

15. Çак çĕре çĕр оркăнĕсем çĕрйĕркелӳ правĕлĕсем тăрăх касса параççĕ (II-мĕш пай), çĕр опҫисем—опҫăн çĕр уставĕ правĕлĕсем тăрăх, йе прикăвăр тăрăх параççĕ.

16. Ирĕк çĕрпе усă курни тесе пăрмайах патшалăх аллинҫе тăракан çĕрпе харпăр хăй вăйĕпе ĕçлесе усă курнине калаççĕ.

Асăрхамалли. Ирĕк çĕр мĕлле, тата ăçта хăвармалли Çĕрĕç Комиссариаҫĕ кăларнă инструкси тăрăх пулать.

17. Кил ҫленĕсем салтака кайсан, вĕсене мопилисатсилесен, йе канашпа халăх ĕçне туса тăма суйласан, вĕсене тивĕçлĕ çĕр ҫленсем слушпăра курăннă, ĕçре тăнă вăхăтра çав кил çинҫех тăрать. Ĕçлеме кайнă пулсан, ăна тивĕçлĕ çĕр, вăл кайнă вăхăтран шутласа икĕ пусу савăрнăш хушши (на срок двух севооборотов) вăл кил çинҫе тăрать; вăл çав вăхăт иртсе кайсан тин киле таврăнсан, ăна саппас çĕр пулсан—çав çĕртен кăларса памалла, çук пулсан— çĕре тепре валеçнĕ ҫухне опҫăри ытти ҫленсемпе танах памалла.

18. Çĕрпе усă курма панă правă çапла майсенҫе пĕтсе ларать: а) хăйне тивĕçлĕ çĕре килри ҫленсем хăйсен ирĕкĕпе пăрахсан; б) кил хăй хуçайствине тытса тăма пĕтĕмпех пăрахсан; в) тĕтĕм сӳнсен (кил вилсе пĕтсен); г) кил урăх çĕре тĕппипех куçса ларса ĕлĕкхи вырăнта хăй тĕллĕн хуçайствă тытса тăма пăрахсан; д) саккунта кăтартнă айăплă ĕççемпĕн суттуса çĕрпе усă курас правăна туртса илсен; е) патшалăха, йе халăха кирлĕ ĕççемпĕн (çулсем тума, çĕр айĕнҫен тухакан хаклă йапаласене кăларма, тата çавăн пек ыттисене тума) саккун тăрăх çĕр туртса илсен.

19. Çĕре тытас правăна ирĕклĕн пăрахас пулсан, килри ҫленсем пурте пĕр шухăшлă пулас пулать; çавăн çинҫен вĕсем хăйсем тăракан çĕр опҫине,

йе, çĕрĕ опҫă çĕрĕнҫен уйрăм пулсан, вырăнти çĕр оркăнне сайавлени параççĕ.

20. Çĕрпе усă куракан хăйне тивĕçлĕ çĕре виçĕ çул хушши йĕркипе, каçарма тивĕçлĕ сăлтавсемсĕр, усăсăр выртарат пулсан, вăл хуçайстваă пĕтсе ларнă тесе шутланат; çавăн пирки çĕр тытас правă пĕтнине çĕр комиççисем шутласа татса параççĕ.

21. Çĕрпе усă куракан çын хăй пурăннă вырăнта хуçайствă тытма пăрахса çĕнĕ вырăнта ăрасна йĕркепе çĕр илсе пурăна пуçланине куççа ларни тесе шутлаççĕ.

22. Çĕре йĕркене кĕртнĕ ҫухне, мелиоратсишĕн, çулсем тума, йе патшалăхпа халăх ĕççемпĕн камăнне те пулин çĕр илмелле пулсан, ăна çавăн пирки тунă правĕлсем тăрăх илмелле (III-мĕш пай).

23. Çĕрпе усă куракантан патшалăха, йе халăха кирлĕ ĕççемшĕн тунă йĕрке тăрăх пĕтĕм çĕрне, йе пайне туртса илсен, йулашки йулнă çĕрĕпе хуçайствăна тытăнса тăма йăвăр пулсан, туртса илнĕ çĕр вырăнне ăна урăх çĕрте касса памалла, çавăн пирки пулнă сийеншĕн çĕр камран туртса илнĕ çыннине тӳлемелле.

24. Çĕрпе усă куракан хăйне тивĕçлĕ çĕр çинҫе саккун тăрăх çаксене тума пултарат: а) çĕрпе хăй суйласа илнĕ майпа усă курма пултарат, мĕн тума йураманнине çак Котексăра кăтартнă; б) пурăнма, йе хуçайствăра кирлĕ çуртсем туса вĕсемпе усă курма пултарат. Çĕрпе усă куракан хăйне тивĕçлĕ çĕр çинҫе кӳршĕри çĕрпе усă куракансен интересне сийен тăвакан йапаласем лартма, кирек мĕн туса хăтланма пултараймаст.

25. Çĕрпе усă куракан çĕрĕ çинҫи çуртсем, хуралтăсем, акнă тырă, тата ытти ӳсен йапаласем, пĕр сăмахпа каласан, çав çĕр çинҫе мĕн пурри пĕтĕмпех çав çĕрпе усă куракана тивĕçлĕ.

26. Çĕр опҫисен, çĕрпе уйрăм усă куракансен çĕр правине пăссан, йе саккуна урлă тăрса вĕсен хуçайствине тĕкĕнсен, çĕр комиççисен (çĕрпе усă куракан ыйтнă тăрăх) правăна пăсни çинҫен тавлашу татăлиҫҫенех çĕрпе усă курас йĕркене, йе хуçайствăна йусаса йамалла.

27. Çĕре сутăн илме, сутма, йе сутса хума, халаласа пама, йе салук хума йурамаст; çак тума йураман ĕççене тунă пулсан, вĕсене тĕрĕс мар, вырăнлă мар тесе шутламалла; çавсене туса айăплă пулнă çынсене уколовни саккун тăрăх айăпламалла, кунтан пуçне тата çав çĕре вĕсенҫен туртса илмелле.

## II-мĕш уйрăм.

## Çĕре ĕçлеме тара парассипе илесси.

28. Çĕре хăйсен аллипе ĕçлесе пурăнакан хуçайствăсем тĕрлĕ инкек, шар пулнипе (тырă пулманнипе, çунса кайнипе, ыҫăх вилсе хуçăлнипе, йе çавăн пек ыттисем пулнипе) вăйсăрлансан, сухака тума хатĕрсем, йе ĕçлеме ыҫăх çук пулсан, вилсе, салтака илсе, мопилисатси туса, канашпа опҫă ĕçне тума суйланса, укçа ĕçлесе тупма хуçайствăран вăхăтлăҳа кайса, тата ытти майпа ĕçлекенсем ҫакса ал çитереймесен, унашкал хуçайствăсем пĕтĕм çĕрне, йе пайне укçалла, çимĕçле, йапалалла, йе урăх майпа тара пама пултараççĕ; тара панă ҫухне çакăнти статйасенҫе кăтартнă условисене асра тытмалла.

29. Тара панă çĕр çинҫе пĕр пусу çаврăнăш хушши (севооборот) акса илме кирлĕ вăхăтлăха тара пама йурат (виçĕ уйлă пулсан—3 çула, тăватă уйлă пулсан—4 çула, тата малалла та çаплах; тĕрĕс пусу çаврăнăш çук пулсан—3 çултан ытла мар).

30. Тепле тӗлсенҫе (исключительные случаи) вулӑс ӗҫтӑвкомӗсем хушнипе тара панӑ срока ҫӑсма йурать, анҫах икӗ пусу ҫавӑрнӑшӗнҫен ытла мар. Тӗрӗс пусу ҫавӑрнӑш ҫук пулсан, 6 ҫуллӑхран ытла мар; ҫав срок иртсен те тара паракан ҫын ҫав тара панӑ ҫӗр ҫинҫе хӑйӗссӗн хуҫайствӑ тытса тӑма пултараймасть пулсан, малашне ҫав ҫӗре уйесри ҫӗр оркӑнӗсем хушнӑ тӑрӑх анҫах тара партарма йурать, ҫӗр оркӑнӗсем хушмасан, вӑл ҫӗр вырӑнти саппас ҫӗр пулать; вӑл ҫӗрпе вара ҫав опҫӑри ытти ҫленсем хӑйсене кирлине кура усӑ кураҫҫӗ.

31. Харпӑр хӑй вӑйӗпе ӗҫлекенсене анҫах ҫӗр тара илме йурать. Хуҫайствӑри вӑйпа харпӑр хӑй ҫӗрӗнҫен ытлашши ӗҫлеме мӗн ҫул ҫӗр кирлӗ, ҫавӑн ҫухлӗ анҫах тара илме йурать, унтан ытлашши ҫӗр никам та тара илме пултараймасть.

32. Тара токӑвӑрӗ, йе токӑвӑра малалла ҫӑсни вырӑнти вулӗҫтӑвком йе йалканашӗ рекистратси тусан тин вӑй илет; тара паракан хӑйӗн ҫӗрӗн ҫуррине ытла тара парать пулсан, ҫав ӗҫе вулӗҫтӑаком рекистратси тӑвать, ҫурринҫен кайа пулсан, йалканашӗ рекистратси тӑвать. Токӑвӑр условисем саккуна хирӗҫ пыраҫҫӗ пулсан анҫах рекистратси тӑвакан оркӑнсем рекистратси тумасӑр тӑма пултараҫҫӗ.

33. Тара токӑвӑрне хут ҫине ҫырса та, сӑмах вӗҫҫӗн те тума йурать; сӑмах вӗҫҫӗн тунӑ токӑвӑра кӗпӗҫтӑвком (опӗҫтӑвком), йе йалканашӗ ҫленӗ умӗнҫе икӗ йевӗн те (тара параканӗн те, илекенӗн те) каласа кӑтартса токӑвӑр кӗнеки ҫине ҫыртарса хумалла.

34. Ҫӗре тара паракан кил, урӑх ҫӗре пӗтӗмпех куҫҫа ларнӑ, йе урӑх ӗҫе тытӑннӑ пирки хӑйӗссӗн хуҫайствӑ тытса тӑма паҫах пӑрахать пулсан, ҫӗре тара пама йурамасть.

35. Ҫӗре тара илекенӗ, тара токӑвӑрӗ тӑрӑх, хӑй илнӗ ҫӗр ҫинҫе тӑрӑшша, малашнехине астуса ӗҫлесе тӑма сӑмах парать, ҫав ҫӗре урӑх ҫынна никама та пама пултараймасть. Тара панӑ вӑхӑтра ҫӗр тара паракан кил ҫине ленкекен хырҫӑмарҫӑран, кулӑнайран, тата халӑх хушшинҫи повиннӑҫҫенҫен тара панӑ ҫӗр ҫине мӗн ҫул ленкет, ҫавна тара илекен ҫын тӳлесе тӑрать.

> Асӑрхамалли. Тара илекен ҫыннӑн ҫав ҫӗре аванлатас тӗлӗшпе мӗнмӗн тумаллине, токӑвӑр ҫинҫе каланине пӗтӗмпех усӑ кураймасан, тара паракан ҫынпа мӗлле условисемпе, мӗлле майсемпе тӳлесе татӑлмаллине токӑвӑр ҫине пӗтӗмпех ҫырмалла.

36. Ҫӗр тара илекен 35-мӗш статйара тума хушнисене тумасан, тара токӑвӑрӗнҫи условисене тытса тӑмасан, ҫӗре тара параканӗ йе ҫӗр оркӑнӗсем хушнӑ тӑрӑх тара токӑвӑрне вӑхӑтсӑрах сӳтме йурать. Ҫавӑн пек ҫух токӑвӑра сӳтес пулсан, тата ҫакӑн пирки тара паракана илекене хуҫайствӑ тӗлӗшӗнҫен мӗлле сийен пулнине ҫӗр тавлашусем татмалли йӗрке тӑрӑх тумалла.

37. Тара панӑ срок тухсан, тара панӑ ҫӗр, тата ҫав ҫӗре аванлатас тӗлӗшпе тара илекенӗ мӗн тунӑ (ҫӗре сийен тумасӑр вӗсене ҫӗртен уйӑрса илме май ҫук пулсан), пурте тара параканнине таврӑнаҫҫӗ; тара парса илнӗшӗн, тата тара илекенӗ хӑй аванлатнинҫен усӑ кураймаи пулсан,—ҫавӑншӑн вӗсем пӗр пӗринпе токӑвӑр тӑрӑх йе токӑвӑр ҫумне ҫӗнӗрен хушша ҫырни тӑрӑх тӳлесе татӑлаҫҫӗ.

38. Тара условисемпе правӗлӗсене тӗрӗс туса тӑнине астӑвас тата тара токӑвӑрӗсем ҫинҫе каланине тытса тӑнӑ ҫух пулакан тавлашусене татса парас ӗҫ ҫӗр комиҫҫийӗсем ҫинҫе, ҫуралатас тӗс пур токӑвӑрсене сӳтесси—сут ҫинҫе.

III-мĕш уйрăм.

## Харпăр хăй вăйĕпе çĕр ĕçлесе тăракан хуçайствăçенҫе тара тытса ĕçлеттерессп.

39 Хăй вăйĕпе çĕрĕçлесе тăракан хуçайствă ĕçлеме вăй, йе хатĕр çитменнипе хуçайствăри кирлĕ ĕççене вăхăтра туса тăраймасӑ пулсан, тара тытса ĕçлеттерме пултарать.

40. Хуçайствăри ĕçлеме пултаракан ҫленсем пурте хуçайствăри ĕççенҫе тара кĕрĕшнĕ çынсемпе пĕр тан ĕçлесен анҫах тара тытса ĕçлеттерме йурать.

41. Тара тытса ĕçлеттернĕ ҫух йалхуçайствинҫи ĕçе сыхлакан, тата норăмлакан саккунсемпе хушусене йаланах тытса тăрсан анҫах тара тытса ĕçлеттерме йурать, урăхла каласан, тара тытса ĕçлеттернĕ ҫухне ĕçлекенсене сыхлакан саккуна пăхăнса тытса тăмалла.

Асăрхамалли. Хăйсен аллипе çĕрĕçлесе тăракан хуçайствăсенҫе тара тытса ĕçлеттерессипе ăна тĕрĕслесси çинҫен правĕлсем Ĕç Комиссариаҫĕ Çĕрĕç Комиссариаҫĕпе, тата Пĕтĕм Раççейри Прохсойуссен Канашĕпе килĕшше тăвать.

IV-мĕш уйрăм.

## Çĕр опҫи.

(Çĕрпе усă куракансен опҫи).

1-мĕш сыпăк.

### Çĕр опҫинҫе тăракансем.

42. Ку таранҫҫенхи çĕр опҫисенҫен пуçне çĕр ĕçлесе тăракан коммунăсемпе ерттелсем, тата ирĕклĕн пĕрлешнĕ уйрăм килсем, йе темиçе кил пĕрлешше ĕлĕкхи опҫăран тухса ларнисем çĕр опҫи тесе шутланаççĕ.

Асăрхамалли. 1. Çĕр опҫи ҫикки йал ҫиккипе пĕр пек килмесен те пултарать.

Асăрхамалли. 2. Йалхуçайстви ĕçне тăвакан коллективсем, унта çĕр ĕçлеме пултаракан çитĕнне çитнĕ çын 15-рен кайа мар пулсан анҫах, çĕр опҫи вырăнне шутлаççĕ.

43. Уйри çĕрпе пĕрле усă куракан килсем йаланах пĕр опҫă вырăнне шутланаççĕ.

Асăрхамалли. Пĕр йалăн пĕр пĕринҫен çĕрпе уйрăм усă курса пурăнакан пайĕсем (кассем) уйрăм çĕр опҫи тесе шутланаççĕ.

44. Уйри çĕр тĕлĕшĕнҫен тĕрлĕ опҫăра тăракан кил ушкăнĕсем, çаранлăхсем, кĕтӳ çӳремелли вырăнсем, вăрманлăхсем, тата çавăн пек ыттисем пĕрле пулсан, çав пĕрле çисе тăракан çĕр тĕлĕшĕнҫен пĕр çĕр-опҫи тесе шутланаççĕ.

45. Хуçайствăри хăшхăш ĕççене тума темиçе çĕр опҫи пĕр пĕринпе килĕшше пĕрлешше пĕр çĕр опҫи тума та, опҫăсен сойусĕ тума та пултараççĕ.

46. Опҫă çĕрĕпе усă курас тесе ирĕкрен килекен çĕрсĕр килсем опҫă килĕшшен анҫах çав опҫа кĕме пултараççĕ, анҫах опҫăсенҫе саккун хунинҫен ытлашши çĕр курăнсан, çĕр оркăнĕсем хушнипе опҫă килĕшмесĕрех çĕнĕ килсем кĕртме йурать.

47. Опҫа кĕрекен килсенҫи çынсем (арçынĕ, хĕрарăмĕ, пысăкки, пĕҫĕкки), тата коллективсен (коммунăсен, ерттелсен) ҫленĕсем те,—пурте опҫă ҫле-

нӗсем тесе шутланаҫҫӗ; 18 ҫула ҫитнисем (арҫынӗ, хӗрарӑмӗ), тата хӑйӗссӗн хуҫайствӑ тытса тӑракан килхуҫисем, ҫав ҫула ҫитмен пулсан та, полноправни ҫленсем тесе шутланаҫҫӗ.

48. Ҫӗр опҫин тӗрлӗ ҫӗрӗсемпе усӑ курмалли йӗркине, тата опҫӑн ҫӗрӗ, йе ҫӗрхуҫайстви тӗлӗшӗпе пулакан ӗҫсен правӗлӗсене опҫӑ уставӗ, йе саккун хушнӑ пек тунӑ прикӑвӑрсем кӑтӑртса тӑраҫҫӗ.

49. Ҫӗнӗрен пулакан ҫӗр опҫисем рекистратси тунӑ вӑхӑтран тин пуҫланса кайаҫҫӗ. Ку таранҫҫен пулнӑ ҫӗр опҫисене, тата вӗсенҫе пулнӑ улшӑнусене хунӑ йӗрке тӑрӑх рекистратси тумалла.

Асӑрхамалли. Хӑҫан, тата мӗлле йӗркепе рекистратси тумаллине Ҫӗр Комиссарнаҫӗ кӑларать.

## II-мӗш сыпӑк.

## Ҫӗр опҫине тытса тӑракан оркӑнсем.

50. Ҫӗр опҫин ӗҫӗсене опҫӑн полноправни ҫленсен мӑн пуххи, тата вӑл суйласа хунӑ оркӑнсем туса, пӑхса тӑраҫҫӗ.

Асӑрхамалли. Ҫӗр опҫи ҫикки йалканашӗ ҫиккипе пӗр пек килет пулсан, ҫӗр опҫи ӗҫӗсене йалканашӗ туса тӑрать, апла килмесен, опҫӑн мӑн пуххи ҫӗр ӗҫҫене туса тӑма суйланӑ уполномоҫҫӑннисем туса тӑраҫҫӗ.

51. Пӗтӗм опҫӑн ӗҫӗсене пурне те опҫӑн мӑн пуххи татса парать, вӗсем ҫаксем: а) пухӑ опҫӑри тӗрлӗ ҫӗрсемпе мӗлле йӗркепе усӑ курмаллине тӑвать, вӑл йӗркесене улӑштармалла пулсан улӑштарать; б) ҫӗр уставне тӑвать, кирлӗ пулсан улӑштарать, ҫӗнӗрен хушмалла пулсан—хушать; в) опҫӑна ҫӗнӗрен ирӗккӗн кӗме ыйтнисене, тата опҫӑран ҫӗрпе тухас текенсене ӗҫ татса парать; г) ҫӗре йӗркене кӳмелли ҫинҫен, куттӑра тухассипе уйрӑм кастарасси, тата ҫавӑн пеккисем ҫинҫен постановлени тӑвать; д) ҫӗрпе мӗлле йӗркепе усӑ курмалла тунӑ пек ҫӗр валеҫет, йе танаштарать; е) анасем хутӑш ҫухне пӗр пек пусусем тӑвасси, ыҫҫӑх пӗрле пӑхасси, тата ҫавӑн пеккисем тӗлӗшпе пулакан ӗҫҫене шутласа тататъ; ж) пӗрле усӑ куракан ҫӗрсене, тата ирӗк выртакан (халӑх) ҫӗрсене хӑй тытас тенӗ пек тыткалать; з) иртнӗ стайара кӑтартнӑ пек уполномоҫӑннисене суйлать, тата вӗсене пӑхса тӑмалли контроҫ йӗркине тӑвать.

52. Опҫӑра тӑракан ҫленсем, 18 ҫултан кайа маррисем пурте, арҫынӗ те, хӗрарӑмӗ те, тата хӑйӗссӗн хуҫайствӑ тытса тӑракан килхуҫисем, 18 ҫултан кайа пулсан та, опҫӑ пуххине (54 ст.). пыма пултараҫҫӗ.

53. Опҫӑри килхуҫисем, йе килсен претставиттӗлӗсем опҫӑ пуххине ҫурри пухӑнсан, вӑл пухӑ саккунлӑ тесе шутланать; ҫӗрпе усӑ курас йӗркене тӑвас, йе улӑштарас ӗҫҫем пирки пухӑра опҫӑри килсен претставиттӗлӗсем виҫӗ пайран икӗ пайӗ пулсан, тата опҫӑри полноправни ҫленсем ҫурринҫен кайа мар пулсан тин пухӑ саккунлӑ тесе шутланать. Уйрӑм киллӗ мар опҫӑсенҫе (коммунӑсемпе ерттелсем) пухӑ саккунлӑ пулмашкӑн вактӗвек ӗҫҫем пирки пулакан пухӑсенҫе опҫӑри полноправни ҫленсен ҫурри кирлӗ, ҫӗрпе усӑ курмалли йӗркене тунӑ, йе улӑштарнӑ ҫухне виҫӗ пайран икӗ пайӗ кирлӗ.

54. Ҫӗрпе усӑ курас йӗркене тӑвас, йе улӑштарас пирки пулакан ӗҫҫем пухӑри ҫленсенҫен виҫӗ пайӗнҫен икӗ пайӗ сасӑ парсан пулаҫҫӗ, ытти ӗҫҫем—нумайрах сасӑ панипе пулаҫҫӗ. Пухха пынӑ кашни ҫын пӗр сасӑ анҫах пама пултарать.

55. Ҫӗр пирки пулакан ӗҫҫене татнӑ ҫухне пухӑ та, ҫӗр опҫин ытти оркӑнӗсем те ҫак Котексӑпа ытти вӑйри саккунсем (действующие узаконения)

тăрăх ĕçлеççĕ; опçă йышăннă устав, йе прикăвăр, йе вырăнти йăла тăрăх та ĕçлеме йураť, анçах вĕсем саккуна хирĕç пулмалла мар.

Асăрхамалли. Çĕр опçи саккунне тĕрĕс тытса тăнине вулĕçтăвкомсем пăхса тăраççĕ.

56. Опçă пуххи тунă постановленисене пăртаккул (прикăвăр) туса çырса хумалла; пăртаккул çине: ăна хăçан, тата хăш вырăнта тунине, пухăра пуррисенçен миçе çын килĕшнипе килĕшменнине, тата çак ĕç тĕлĕшпе пулнă йапаласене, кирлĕреххисене кăтартмалла. Пăртаккул çине пухăвăн претçеаттĕлĕпе çекреттарĕ алă пуссан, йе пухăра пулнисенçен çурри ытла алă пуссан тин пăртаккул ĕçе кĕме пултараť.

57. Çĕр опçи хăй аллинçи çĕр те йĕркеллĕ, тата кирлĕ йапалашăн усă курнишĕн патшалăх умĕнçе сăмах тытаť.

## III-мĕш сыпăк.

## Çĕр опçисен прависемпе вĕсем çине хунă ĕççем.

58. Кашни çĕр опçи, опçăри полноправни çленсем çурри ытла постановлени тусан (53-мĕшпе 54-мĕш статйасем тăрăх), çĕрпе кивĕ йĕркепе усă курма та, çĕнĕ йĕрке йышăнма та пултараť.

59. Хресçенсен çун çĕрĕпе сутăн илнĕ çĕр çинçе пулса кайнă йал ĕçне туса тăракан коллективсем те, çĕр хуçисен çĕрĕ çинçе пулса кайнисем те (çав çĕре халăха тухнă хыççăн çĕр оркăнĕсем, йе Капашсен Сиесĕсем хушнă тăрăх халăха валеççе панисем), çĕрпе усă курмалли йĕркене хăйсен ирĕкĕпе суйласа илме пултараççĕ. Çавнашкал коллективсенçен çĕрпе тухакан çленсен, коллектив патшалăхран укçа, йе йапаласем кĕтелле илнĕ пулсан, хăйсене тивекен тӳпине тӳлемелле.

Асăрхамалли. Коллектив пулаççен халăха усă курма валеççе паман çĕрсем çинçе (сохоссен, хыснан çĕрĕсем, тĕрлĕ уçрештенисене, оркнисатсисене, тата претприаттисене панă çĕрсем) пулса кайнă йал ĕçне туса тăракан коллективсем йепле условисем, правĕлсем тăрăх пĕтмеллине урăх правĕлсем кăтартаççĕ.

60. Çĕрпе усă куракан хăйне тивĕçлĕ çĕре касарма тивĕçлĕ салтавсемсĕр усă курмасăр тăратсан, йе саккуна пăсса тара парсан, çĕр опçи вăл çĕре вăхăтлăха, пĕр пусу çавăрнăшĕнçен мала мар, унтан туртса илме пултараť. Çавăн çухне пулакан тавлашусене çав тĕлĕшпе ĕç пур çĕрĕçлекенсем шалăпă панă тăрăх çĕр комиççисем пăхса тухаççĕ.

61. Çĕре наçарлатмалла майпа хуçайствă тытакансенçен (сăмахран, çĕр валеçессе кĕтсе çĕре, çĕнетмелли пур çинçенех, çĕнетмесĕр тăракансем) çĕр опçи тăвас тенипе, йе çĕр оркăнĕсем пуçласа йанипе çав çĕрсене пĕр пусу çавăрнăш иртес вăхăтлăха туртса илме йураť, ун вырăнне урăх çĕрсем памалла мар; çак ĕçе çĕр тавлашăвĕсене пăхакан йĕркепе тумалла.

62. Тĕтĕм сӳнсен, çак Котексăра кăтартнă тăрăх туртса илнисен, хăйсем ирĕклĕн пăрахнисен, йе сутпа туртса илнисен çĕрĕсем çĕр опçи аллине кайаççĕ.

63. Опçăри пĕрле усă курмалли (валеçмен) çĕрсене: кĕтӳ çӳремелли вырăнсене, кĕтӳ çулĕсене, шывсене, йурăхсăр çĕрсене, тата çавăн пеккисене опçă хăй тытса тăраť.

64. Çĕр опçи хăй йаçĕпе пурлăх илме, токăвăрсем тума, сутра шырама, сăмах тытма, тата ытти уçрештенисенçе ĕç тутарма пултараť.

V-мĕш уйрăм.

# Кил (çĕрĕçлесе тăракан хуçайствă).

I-мĕш сыпăк.

## Килре тăракансем.

65. Çемйе тĕлĕшпе пĕрлешше йалхуçайстви ĕçне туса тăракан ушкăна кил тесе калаççĕ. Кил пĕр пĕҫҫен çынран та пулма пултарать (арçынĕ, хĕрарăмĕ пурĕ пĕр).

66. Килте пуррисем те (çак шута çул сахаллисем те, ваттисем те кĕреççĕ), укçа ĕçлесе тупма вăхăтлăх кайнисем те, саккунпа кил шутĕнҫен тухманнисем, кил ҫленĕсем тесе шутланаççĕ. Каҫҫа пырсан, киле кĕрсен, ывăллăха, хĕрлĕхе илсен килре ҫленсем нумайланаççĕ, тухса кайсан, вилсен—ҫакаççĕ.

Асăрхамалли. Каҫҫа пырса, киле кĕрсе, йе ывăллăхпа хĕрлĕхе илсе кил ҫленĕсем хушшине хутшăннисем çав килти пĕрле усă курмалли çĕрпе, тата пурлăхпа ыттисем пекех усă курма правă илеççĕ, лешĕ килĕнҫи çĕрпе усă курма правă çухатаççĕ.

67. Кил усă куракан çĕр, çуртсем, тата хуçайствăри ĕçлемелли хатĕрсем кил ҫленĕсене,—арçынне, хĕрарăмне, миçе çултине пăхмасăрах,—пурне те тивĕçлĕ.

68. Килхуçи (арçын йе хĕрарăм) çав килĕн хуçайствă ĕçĕсем тĕлĕшпе кил претставиттĕлĕ пулать.

69. Килхуçи тăрăшша тытмасăр кил хуçайствине салатсан, ҫленсем сайавлени панипе, çав сайавленийе йалканашĕ тĕрĕслетсен, вулĕçтăвком килхуçине кăларса ун вырăнне çав килти урăх çынна лартма пултарать.

70. Килйышра çула (çитĕнсе) çитмен ҫленсем анҫах тăрса йулсан, опекă саккунĕ тăрăх йалканашĕ çав киле пеккун тăвать.

71. Кил ҫленĕсем (килхуçи те) харпăр хăйне кирлĕ пирки парăма кĕрсен, çав парăма сутпа тӳллеттерне çĕре кил пурлăхĕ кайма пултараймасть.

72. Кашни киле, тата унта пулнă улшăнусене йалканашĕ кил спискисем çине рекистратси туса тăрать, килйышри ҫленсемпе килхуçине йаҫĕпе кăтартать. Рекистратси туманшăн 14 кун хушшинҫе вулăсри çĕр комиççине шалăпă памалла.

II-мĕш сыпăк.

## Çĕрĕçлесе тăракан хуçайствăна (киле) уйăрасси.

73. Çĕр ĕçлесе тăракан хуçайствăна (киле) уйăрса илмелле пулсан, кил ҫленĕсем (арçыне, хĕрарăмне, миçе çултине пăхмасăр) пĕрле усă курса тăракан çĕрпе пурлăха уйрăм усă курма уйăрса илеççĕ.

74. Килĕн уйăлакан ҫленĕсем çĕр ĕçлесе тăракан çĕнĕ хуçайствăсем тăвасшăн уйăлаççĕ пулсан, тата çавсене тума пултараççĕ пулсан анҫах кил çĕрне уйăрса илме йурать; ытти ҫухне кил пурлăхне анҫах уйăрса илеççĕ.

75. 18 çула çитменнисем, тата икĕ пусу çавăрнăш хушши ытларах кил хуçайствине тытас ĕçе хăйсем ĕçлесе, йе укçа тенкĕ парса йерменнисем киле уйăрса илме пултараймаççĕ.

Асăрхамалли. Салтака илнипе, мопилисатси тунипе, суйласа кĕртсе патшалăх ĕçĕсенҫе тăнипе, ҫирлĕ пирки, йе вĕреннĕ пирки хуçайствă ĕçне йерменнисем çак статйана кĕмеççĕ.

76. Çĕрпе пурлăха йапалан (в натуре) уйăрса илеççĕ, пурлăх тĕлĕшĕнҫен (çĕр тĕлĕшĕнҫен йурамасť) йапала вырăнне йапала шутлама йураť, тивнĕ йапаласен хакне пăхса йапаласемшĕн укçа, йе çимелли йапаласем парса тӳлесе татăлма йураť.

77. Уйăрнă ҫухне пĕрле усă курнă пурлăха анҫах уйăрса илеççĕ; килри ҫленсем харпăр хăй усă курма туйаннă пурлăх, çав пурлăха вĕсем хăйсен вăйĕпе илнине кăтартсан, тата вырăнти йăла тăрăх килри кашни ҫленĕн супинкки тесе шутлакан пурлăх çав уйăрмалли пурлăх шутне кĕмест.

78. Уйăрăлнă ҫухне кашниҫех уйăрлакансем вулĕçтăвкома рекистратси тума уйăлу хуҫĕ тăратаççĕ; çав хут çине: а) килри ҫленсем камсем, тата хăçан уйăласси çинҫен килĕшнине, б) уйăлакансем ăçти, тата хăш анасене уйăрса илмеллине; в) хăш пурлăха, тата ăна мĕлле уйăрса илмеллине; г) хăçан, тата мĕлле йĕркепе уйăрмаллине; д) уйăлма килĕшекенсем çаксенҫен пуçне тата урăх мĕлле условисем (саккуна хирĕç пыманнисем) тума килĕ тесе шутланисене кăтартмалла, тата е) килĕшӳре пулнисем алă пусни пулмалла

79. Çав уйăлу хуҫĕ саккуна хирĕç пырсан анҫах вулĕçтăвком рекистратси тумасăр тăма пултараť. Рекистратси туманшăн 14 кун хушшинҫе уйесри çĕр комиççине шалăпă кĕртмелле.

80. Уйăлакансем уйăлас тĕлĕшпе килĕшше çитеймен пулсан, уйăлма ыйтнă хута вулăсри çĕр комиççине йамалла; çапла ҫухне ĕçе çĕр комиççисенҫе татсан, вĕсем шутласа татип саккун вăйĕ илсен тин уйăлас ĕçе вулĕçтăвком рекистратси тăваť.

81. Киле уйăрса илнĕ ҫухне çĕртен пуçне пурлăха та уйăрса илмелле пулсан, çапла уйăрăлнă ҫухне пулакан тавлашусене татас ĕç çĕр комиççисен аллинҫе; çĕре уйăрмасăр пĕр пурлăха анҫах уйăрса илнĕ ҫухне пулакан тавлашусене халăх суҫĕ татса параť.

82. Хуçайствăсен çĕрĕсене уйăрас пирки пулакан тавлашусене пăхнă ҫухне, вулăсри çĕр комиççисем пуринҫен малтан уйăлакан хуçайствăн ҫленĕсене опҫă аллинҫе, тата вырăнти çĕр оркăнĕсем аллинҫе тăракан, ахаҫ вырткан çĕр çине вырнаçтарма май пурри-çуккине пăхаççĕ; çапла вырнаçтарма май çук пулсан анҫах хуçайствăн çĕрĕсене уйăрмалла тăваççĕ.

83. Уйăлса пулакан çĕнĕ киле тĕп кил вырăнĕнҫен (плантинҫен) çуртйĕр çавăрма çителĕклĕ çĕр паман пулсан, опҫăн ăна саппас выртакан çĕртен çĕр парас пулаť.

84. Çĕре халăхпа пĕрле ĕçлесе усă курса тăмалли йĕрке пур опҫăсенҫе çĕрсене уйăрнă ҫухне, уйăлакансен тӳпине мĕн ҫул çĕр тивнине халăх çĕр валеçнĕ ҫухне ҫунтан çĕр мĕн ҫул тивнинҫен пĕлеççĕ, ытти тĕлсенҫе вырăнти йăла тăрăх (вăл саккуна хирĕç пымасť пулсан) пĕлеççĕ. Уйăлнă ҫухне килри ҫленсен, арçынăн та, хĕрарăмăн та, пĕр тан правă пур.

III-мĕш сыпăк.

## Хуçайствăсем (килсем) вакланса кайассине ҫарасси çинҫен.

85. Тĕпленсе кайнă хуçайствăсем уйăлнă пирки ытла вакланса кайнипе наҫарланаççĕ, пĕтеççĕ; çавнашкал уйăлусем пуласран Кĕпĕрнери çĕр управленисем хут тăратнă тăрăх Кĕпĕрне ĕçтăвкомĕсене хуçайствăсене вакланнине ҫаракан постановленисем кăларма правă панă. Мĕн ҫултан вак пулмалла маррине малтан Çĕрĕç Комиссариаҫĕ норăм тăваť.

86. Вакланмалла мар норăмсене куттăрла, отрупла хуçайствăсен, кăтартнă норăмран ытла вакланмалла маррисен, пурин те пăхăнса тăмалла;

çĕр опӡинӡе тăракан хуçайствăсем çав норăма пĕтĕм опӡипе, йе уйрăм килсем прĕклĕн çураçça тăваççĕ; тунă ӡухне иртнĕ статйасенӡи условисене астуса тăмалла.

87. Килсем вакланмалла мар йĕркене пĕтĕм опӡăшăн прĕклĕн йышăнас тесен, опӡăри полноправни ӡленсенӡен 3 пайран 2 пайĕ (²/₃) постановлени тăвас пулаҭ. Ваклакланмалла мар вăхăт пĕр пусу çаварнăшĕнӡен кайа йурамасҭ; уйрăм килсем çапла тăвас пулсан, çав килсенӡи полноправни ӡленсем пурте çураçуллă пулас пулаҭ. Çапла туиа çураçнине вулĕçтăвком йĕрке тăрăх рекистратси тусан, вăл вăй илет. Халăх йышăннă йĕркепе çĕрпе усă куракан опӡăсенӡе килсем вакланмалла мар туни çав опӡăсене çĕр валеçме, тата вакланмалла мар килсене тивекен çĕрĕ халăхăнни пек улăштарса туиа ӡарайиасҭ.

88. Вакланмалла мар йĕркене йышăннă килтен тухса кайакан ӡлен хăйне тивĕçлĕ пурлăхшăн укçа, йе йапала тӳлеттерме пултараҭ. Çак тĕлĕшпе çураçу çук пулсан, мĕн ӡул тӳлемеллине çĕр комиççисем тăваççĕ, анӡах çак тӳлев пĕрле хуçайствăн виççĕмĕш пайĕнӡен мала пулмалла мар; килте йулаканни ыйтни тăрăх тӳлеве татас срока 5 çул таранӡӡен ӡăсма йураҭ, ӡăснăшăн про̆ӡăн тавраш хушмалла мар.

89. Хунă йĕрке тăрăх вулĕçтăвкомра рекистратси тумасăр уйрăлнă хуçайствăсен саккунра вăй çук; апла ӡухне хăйсен çĕрĕпе пурлăхпе уйăрнă хуçайствăсем çĕре йĕркепе кĕртнĕ ӡухне те, хуçайствăна тивекен хырçăмарçа, налуксене, тата повиннăçсене тӳлеттернĕ ӡухне те пĕр хуçайствă вырăнне шутланаççĕ.

## VI-мĕш уйрăм.

# Çĕрпе усă курмалли йĕркесем.

### I-мĕш сыпăк.

### Тĕп йĕркесем.

90. Çĕр опӡинӡе çĕрпе çапла майсемпе усă курма йураҭ: а) халăхла йĕркепе (çĕре валеççе танаштарса); б) уӡаскăн уйрăм кастарса илес йĕркепе (килсем хăйсене тивĕçлĕ çĕре анан анан, куттăрсем, отрупсем кастарса илеççĕ, çĕрĕсем ӡакмаççĕ, хутшăнмаççĕ), тата в) йулташлăх йĕркипе (товарищеский способ). Ку йĕрке ӡухне опӡăри ӡленсем йалхуçайстви коммунисем, ерттелĕсем, йе çĕре пĕрле ĕçлемелли йулташлăхсем туса пĕрле ĕçлесе çĕртен усă кураççĕ.

Асăрхамалли. Опӡă тĕрлĕ йурăхлă çĕрсемпе тĕрлĕ йĕркепе усă курмалла тума пултараҭ, анӡах кирлĕрех укотине мĕлле йĕркепе усă курмалла тунă, çавă тĕп йĕрке тесе шутланаҭ.

91. Çĕр опӡи пĕр йĕркене пăрахса тепĕр йĕрке йышăннă ӡухне опӡăри килĕшмен ӡленсем хăйсен çĕрĕсене çĕнĕлле тăвас текенсенӡен уйрăм кастарса илсе ĕлĕкхи йĕркепех йулма пултараççĕ.

### II-мĕш сыпăк.

### Çĕрпе халăхла йĕркепе усă курасси.

92. Çĕрпе халăхла йĕркепе усă курса тăнă ӡухне опӡăри кашни кил опӡă аллинӡи çĕртен хăйне тӳпе илме пултараҭ; опӡăри ӡленсене çĕр пĕр пек тивретмешкĕн, тӳперен тивекен çĕр шутне улăштарма, ӡакарма, йе асларма йураҭ.

93 Çĕрпе халăхла йĕркепе усă куракан опђăсенђе çĕре пĕтĕм халăхпа виççе, йе хăш килсенђен çĕр кăларса теприсене хушса парса танаштараççĕ.

Асăрхамалли. Хуçайствисем çураçмасан çĕре пĕр пусă çавăрнăшĕнђе пĕрререн ытла кăларса, хушса танаштарма йурамасŤ, ăна та пусă çавăрнăш пуçланас умĕн тумалла.

94. Çĕре танаштармалли правĕлсене опђă саккунпа килĕштерсе туса хăйĕн уставĕ çине çырса хураŤ, ун çинђе: а) опђăри мĕлле çĕрсене (тырă акмалли çĕрсем, çаранлăхсем, тата ыттисем) валеçмеллине; б) тĕрлĕ çĕрсене мĕлле йетинитсăран (йатакран, ĕçлекенрен, тата ытти çавăн пеккисенђен), мĕлле пăхса (çĕр пыршшĕне, тырă пулнине, тата урăх çавăн пеккине) танаштармаллине; в) миçе çултан валеçмеллине, тата г) халăх çине хăварнă çĕрпе мĕлле майпа усă курмаллине татăклăн кăтăртмалла.

95. Вырăнти условисене, хуçайствă çиçтемисене пăхса пĕтĕм кĕпĕрнипе, йе уйрăм районĕпе çĕре мĕлле йетинитсăсем тăрăх валеçмеллине Çĕрĕç Комиссариађĕ çирĕплетнипе Кĕпĕçтăвкомсем тума пултараççĕ. Çавнашкал постановленисем тухађђен опђă хăй çĕре мĕлле йетинитсăсем тăрăх валеçмелле тунă. çавăн тăрăх пĕрре валеççе танаштарнă çĕре валеçмелли йетинитсăсем çинђен Кĕпĕçтăвком тунă постановлени вăхăтсăр тепĕр хут валеççе танаштармах хушмасŤ.

III-мĕш сыпăк.

## Çĕре уђаскăн кастарса илес йĕрке.

96. Уђаскăн кастарса илес йĕрке тăрăх çĕрпе усă курнă ђухне опђăра тăракан кашни кил çĕре уђаскăн кастарса илме пултараŤ; çав уђаскăсем а) кашни хирте анан анан, б) отрупла, йе в) куттăрла пулма пултараççĕ.

97. Анан анан уђаскăсем кастарса илсе çĕрпе усă курнă ђухне пĕр сынăн анисем ытти çынсен анисем хушшинђе тĕрлĕ вырăнта пулаççĕ.

98. Отрупла уђаскăсем кастарса илсе çĕрпе усă курнă ђухне çĕрпе усă куракан пĕтĕм çĕрĕ, йе пĕр пек усă курмалли çĕрĕ (сăмахран, уй анисем) пĕр вырăнта пулаŤ, кил вырăнĕ йалтах пулаŤ.

99. Куттăра тухса çĕрпе усă курнă ђухне çĕрпе усă куракан кил вырăнĕ те кастарса илнĕ уђаскăрах пулаŤ.

100. Уђаскăн кастарса илсе усă курмалли йĕркене хăш опђăсенђе çĕр-йĕркелў актисем, йе опђă хăйĕн прикăвăрĕ тăрăх тунă, тата кайран саккун тăрăх улшăнман, çав опђăсенђе анђах вăл йĕрке пур тесе шутланаŤ.

101. Уђаскăн кастарса илсе усă курмалли йĕркене çĕнĕрен тунă ђухне кашни килĕн мĕн ђул çĕр пулмаллине çĕр опђин постановленисем (прикăвăрĕсем) кăтартаççĕ, вĕсем пуриншĕн те пĕр пек пулмалла; ăçта уђаскăн кастарса илсе усă курмалли йĕрке пур, вăл опђăсенђе кашни килĕн мĕн пыршшĕ (пысăккăшĕ) уђаскă пулмалли—вĕсем мĕн ђул çĕрпе тавлашусăр усă курса тăнинђен паллă; çав уђаскăсем тĕлĕшĕнђен тавлашу пулсан, çĕр комиççисем çак тĕлĕшпе пур актăсем тăрăх, çвитеттĕлсем кăтартнă тăрăх татса параççĕ.

102. Анан уђаскăсем кастарса илсе çĕрпе усă курнă ђухне уйрăм килсен уђаскисен вырăнĕсемпе ђиккисем патшалăх, йе опђă çĕрне йĕркене кĕртнĕ ђухне, йе патшалăха кирлĕ ĕççемшĕн çĕре илсен улшăнма пултараççĕ. Кунтан пуçне тата опђăри полноправни ђленсем çурри ытла постановлени тусан, çĕрпе усă курмалли йĕркене аванлатнă ђухне (анасене пысăклатни, нумай пусуллă уйсем туни) çĕр опђи уйрăм килсен çĕр уђаски ђиккисемпе вырăнĕсене улăштарма пултараŤ. Куттăрла, тата отрупла уђаскăсем çинђе хуçайствăна аванлатнă йĕркепе тытаççĕ пулсан, çавсен уђаскисен вырăнĕсемпе ђиккисене вĕсем килĕшмесĕр çĕре йĕркене кĕртнĕ ђухне, тата патшалăхшăн пит кирлĕ пулсан анђах пăсса улăштарма йураŤ. Мĕнле хуçайствăсене аванлатнă тесе шутламаллине вырăнсене пăхса Çĕрĕç Комиссариађĕ тăваŤ.

IV-мĕш сыпăк.

## Çĕре йулташлăх йĕркипе ĕçлесе усă курасси.

103. Çĕре йулташлăх йĕркипе ĕçлесе усă курнă ђухне опђăра тăракан кашни ђленĕн, йулташлăх çĕрĕнђен хăйне тӳпе уйрăм çĕр кастарса илмесĕр, йулташлăх çĕрне ытти ђленсемпе пĕрле ĕçлесе усă курма правă пур.

104. Çĕре йулташлăх йĕркипе ĕçлесе усă куракан çĕр опђисене, унта ирĕклĕн кĕрекен ђленсем тăрăшша ĕçленипе лайăхрах усă курас тесе йалхуçайствине малалла йама çăмăлтарах пултăр тесе тăваççĕ; йулташлăха кĕрекен ђленсем хăйсем ĕлĕк усă курса тăнă пур çĕрне те, йе хăш йышши çĕрне анђах пĕрле усă курма пĕрлештереççĕ, йе пĕтĕм йулташлăхпа çĕр пĕрле кастарса илеççĕ.

105. Çĕре йулташлăх йĕркипе ĕçлесе усă куракан опђăсенђе кашни ђлене тӳперен мĕн ђул çĕр тивнине йе касăмласа уйăрса хураççĕ (çĕре пĕрле ĕçлемелли ерттелсемпе йулташлăхсенђе), йе касăмласа уйăрса хумаççĕ (йалхуçайстви ĕçне туса тăракан коммунсенђе).

106. Çĕре халăхпа пĕрле ĕçлемелли ерттелсемпе йулташлăхсенђе кашни ђлене мĕн ђул çĕр тивнине касăмласа хурса йаланах çавнашкал тăратма та йураӗ, кайран уйăра уйăра танаштарма та йураӗ.

107. Йулташлăх тумашкăн 1) уђретиттелни прикăвăр (токăвăр), 2) устав, тата 3) çĕре кастарса илни çинђен актă кирлĕ. Йулташлăха вăхăтлăх анђах тăвас тесен, çĕре кастарса илнĕ актăпа устав кирлех мар.

108. Уђретиттĕлни прикăвăр (токăвăр) çинђе а) йулташлăх мĕн йатлине, вăл мĕн тумаллине (сатађђисене); б) йулташлăха (ерттеле, коммуна) миçе çын кĕнине, вĕсен йађĕсене; в) йулташлăх йĕркипе усă курма мĕн ђул çĕр пĕрлештернине, йе пĕрле мĕн ђул çĕр кастарса илнине, тата г) йулташлăха кĕрекен кашни ђлене тӳперен мĕн ђул çĕр тивнине (касăмласа хураççĕ пулсан) кăтартмалла.

109. Йулташлăх йĕркилĕ опђăн уставĕ çинђе, унăн йатне, вăл хăш вырăнтине кăтартниненђен пуçне, тата çаксене кăтартмалла: а) çĕнĕрен кĕрес текен ђленсене йулташлăха мĕлле йĕркепе кĕртмеллине, тухас текенсене мĕлле йĕркепе кăлармаллине, б) ĕçлемелли хатĕрсене мĕлле тыткаламаллине, в) ђленсем пĕрле мĕн ђул, мĕлле ĕçлемеллине, ĕçлемелли хатĕрсене тата урăх пурлăха, г) çĕре пĕрле мĕлле йĕркепе ĕçлемеллине, тата йулташлăх ђленĕсем хуçайстиă ĕçĕсенђе йепле ĕçлемелли йĕркесене, д) пĕрле ĕçлесе тунă йапаласене мĕлле йĕркесем тăрăх уйăрса илмеллине, е) пĕрлехи (общий) мул (кăпиттал) мĕлле тумаллине, ж) йулташлăх пĕтес пулсан, мĕлле йĕркепе пĕтмеллине, тата ђленсем çаксенђен пуçне тăвас тесе шутланă урăх условисене правĕлсене, саккуна хирĕç пыманнисене—кăтартмалла.

110. Йулташлăхран тухакан ђлен хăй унта ĕçленĕшĕн, хăйне тӳпе пурлăха пĕрлехи пурлăха хăварнăшăн саплаттарма (тӳлеттерме) пултараӗ. Çавăнпа пĕрлех тата тухса кайакан ђлен, хăй тухса кайнă пирки йулташлăха тунă сийеншĕн йулташлăх ăна саплатарма пултараӗ. Çакăн пирки пулакан тавлашусене çĕр комиççисем татса параççĕ.

> Асăрхамалли. Ана çинђи тырра, тата ытти çимĕççене пуçтарса илиђђен ђлен йулташлăхран тухса кайсан, çавăнтан хăйне тӳпе ĕçленине кура илме пултараӗ.

111. Йулташлăх саккун ирĕк панă тăрăх халăхла йĕркене, йе уђаскăн кастарса илес йĕркене куççан, йе йулташлăх пĕтсе ларсан, йулташлăхри ђленсене мĕн ђул çĕр тивнине йулташлăх уставĕ тăрăх тăваççĕ, уставра çак

тӗлӗшпе кăҫартни ҫук пулсан, йулташлăх ҫленӗсен мӗн пуххи тунă тăрăх тăваҫҫӗ.

Асăрхамалли. Патшалăх хысни ҫӗрӗ ҫинҫе пулнă йалхуҫайстви коллективӗсем пӗтнӗ ҫухне ҫӗр каллех патшалăх хысни аллине кайаҫ.

V-мӗш сыпăк.

## Ҫӗре халăхпа пӗрле ӗҫлесси ҫинҫен.

112. Кашни ҫӗр опҫинҫех ҫӗрпе усă кўрмалли мӗлле те пулин йӗрке пур; тырă акса пуҫтарса кӗнӗ ҫух пурин вăйӗпе ӗҫлеме ҫăмăлтарах пултăр тесе полноправни ҫленсенҫен ҫурри ытла (53—54 ст. тăрăх) постановлени тусан, ҫав йӗркерен пуҫне опҫăри пӗтӗм ҫӗре, йе унăн пайне халăхпа пӗрле ӗҫлемелле тума йураҫ.

113. Ҫӗре халăхпа пӗрле ӗҫлемелле тăвассин условисене, йӗркине ҫак ӗҫе йерекенсен уставӗсем (прикăвăрӗсем) кăтартса параҫҫӗ; вăл устава вулăсри ӗҫтăвакан комитет рекистратси тăваҫ.

114. Халăхпа пӗрле ӗҫлес текенсем сахалтарах пулсан, хирӗҫҫисем нумайрах пулсан, ҫав пӗрле ӗҫлес текеннисем ыйтнă тăрăх опҫăн вӗсене ҫӗр кирлӗ таран пӗр вырăна касса памалла. Каснă ҫухне ҫӗр уйрăм касмаллин правӗлӗсем тăрăх тумалла, ҫӗрпе усă курнă ҫух пӗр пӗрне усăллăрах пулассине асра тытмалла.

115. Халăхпа пӗрле ӗҫлесе тăракан ҫӗрсем ҫӗр валеҫнӗ ҫухне ҫав ҫынсенҫех йулаҫҫӗ, тата вӗсене тивекен ҫӗр валеҫмелли йетинитсă тăрăх шутласан, халăхӗнҫен нумай пулсан та ҫакарма йурамасҫ.

VII-мӗш уйрăм.

## Халăхла йӗркепе усă куракан опҫăсенҫе ҫӗре валеҫесси.

116. Ҫӗр валеҫес пулсан ҫӗр опҫи кашнинҫех ҫакăн пирки прикăвăр тăваҫ; валеҫес текен ҫленсем нумайрах пулсан, валеҫме йураҫ. Прикăвăр ҫинҫе: а) валеҫмелли ҫӗрсене; б) мӗлле йетинитсăран валеҫмеллине (йатакран, ӗҫлекенрен, тата ыт. те); в) кашни килӗн миҫе йетинитсине; г) миҫе ҫуллăх валеҫнине, тата д) валеҫнӗ ҫухне саппас ҫӗр йулсан, вăл ҫӗрпе мӗлле йӗркепе усă курмаллине кăтартмалла.

117. Валеҫнӗ ҫухне валеҫмелли йетинитсăна кура опҫăри килсене пурне те пӗр пек танаштарса памалла.

118. Ҫуртсем, ҫимӗҫ пахҫисем, сатсем, иҫӗм ҫырли саҫӗсем, йе урăх хаклă йапаласем йышăнса тăракан вырăнсене хăйсене валеҫме йурамасҫ, анҫах вӗсем йышăнса тăракан ҫӗре ытти ҫӗрсене виҫнӗ ҫухне кăларса илме йураҫ.

119. Усă курса тăраканнисем тӗппипех аванлатнă уҫаскăсем (сăмахран, шăвармалли туни, йӳҫлӗхе, шурсене типӗтни) валеҫнӗ ҫухне малтан усă курса тăнисем аллинҫех йулаҫҫӗ; апла хăварма май килмест, йе вырăнлă мар пулсан, вӗсене урăх ҫынсене пама йураҫ; анҫах илекеннисен вӗсене усă курайман тăкакшăн тӳлемелле.

120. Опҫă ҫӗр валеҫмелли ҫинҫен тунă прикăвăрсене вулӗҫтавком рекистратси тусан, ӗҫне тума йураҫ. Ҫӗр валеҫмелли правӗлсене тытса тăмасан, опҫăри ҫленсен правине пăссан, прикăвăр рекистратси тăвăнаймасăр йулаҫ; прикавăра кайалла панă ҫухне прикăвăр ҫинҫе саккуна хирӗҫ мӗнмӗн тунине кăтартса памалла, вара опҫăн ҫавсене йе йусамалла, йе валеҫессине пăрахмалла.

121. Сухаламалли ҫӗрсене (уй аписене) опҫă йышăннă пăсу ҫаврăнăшӗ виҫӗ хуҫҫен ҫаврăнса илмесӗр валеҫме йурамасҫ.

122. Опӗӑ хайӗн ҫӗрне, тата хуҫайствине аванлатнӑ нӗркепе тытса усӑ курас тет пулсан (вак анасенӗен пысӑк анасем, уйа нумай пусуллӑ, тата ҫавӑн пеккисене тумалла пулсан), тата ҫӗре ирӗксӗр кӑларса илсен, опӗӑран тухса ларсан, тата ҫӗре йӗркене кӗртнӗ ӗух анӗах ҫӗре вӑхӑт ҫитмесӗр валеҫме йурат, унсӑрӑн йурамаст.

123. Ҫӗре пӗрре валеҫҫен тепре валеҫиӗӗен кӑларса, хушса танаштармалла пулсан, кашнинӗех (92-мӗш статйари асӑрхамалли пекрех) прикӑвӑр тумалла, хӑш килсенӗен мӗн ӗул ҫӗр кӑларса хӑш килсене хушша памаллине, тата мӗншӗн ҫавӑн ӗул кӑларса хушнине прикӑвӑр ҫинӗе кӑтартмалла.

124. Опӗӑ ҫӗре кӑларса хушса танаштармалли ҫинӗен прикӑвӑр тусан, ҫавӑнпа килӗштермен ӗленсем 14 кун хушшинӗе ҫӗр комиҫҫисене шалӑпӑ кӗртмесен, прикӑвӑр тӑрӑх ӗҫе тума йурат; шалӑпӑ кӗртсен, ӑна ҫӗр пирки пулакан тавлашусене татмалли йӗрке тӑрӑх пӑхса тухмасӑр ӗҫе кӗртме йурамаст.

## VIII-мӗш уйрӑм.

## Кил вырӑнӗ (плантӑ) ҫӗрӗсемпе ҫаранлӑхсем.

125. Кашни кил йал лармалли вырӑнтан кил вырӑнлӗх ҫӗр илме пултарат.

126. Ҫӗр валеҫесси валеҫмелли йетинитсӑсем ҫинӗен ҫырнӑ правӗлсем ҫинӗен кил вырӑнӗсем тӗлӗшӗнӗен хӑват ҫук; усӑ куракannисем килӗшмесӗр ҫав уӗаскӑсене танаштарас тесе валеҫме, касса илме, урӑх вырӑна куҫарма йурамаст.

127. Кил вырӑнӗсем йалсенӗе мӗн пыршшӗ пулмаллине опӗӑ тӑват; ҫакӑн пирки опӗӑри полноправни ӗленсенӗен ҫурри ытла постановлени тумалла; кил вырӑнӗсем пур килсемшӗн те пӗр пек пулмалла. Кил вырӑнӗ ытлашши пулсан, ҫавӑн ӗухлӗ ҫӗр урӑх ҫӗртен тытса, кайа пулсан, хушса парса пӗтӗм халӑхшӑн йышӑннӑ норӑмпа танаштармалла; ҫапла танаштарнӑ ӗухне ҫӗр тӗсне (мӗллине) пӑхмалла.

128. Пӗӗӗкрех кил вырӑнӗсене хушша пама, тата ҫӗнӗрен кил вырӑнӗсем тума опӗӑ ытти ҫӗртен ҫӗр илсе йал вырӑнлӗх ҫӗре пысӑклатма пултарат.

129. Куттӑра, йе выҫҫӗлккӑна тухса ларакан килсем ӗлӗкхи кил вырӑнӗсемпе йалта виҫӗ ҫул таранӗӗен усӑ курма пултараҫҫӗ, ҫав вӑхӑт иртсен вӑл уӗаскӑсем опӗа, йе уйрӑм килсене кайаҫҫӗ.

130. Опӗӑ усӑ курса тӑракан ҫаранлӑхсене сухаламалли ҫӗрсене валеҫнӗ йетинитсӑсем тӑрӑхах, ӑна валеҫнӗ пекех валеҫмелле, пӗр опӗӑрах сухамалли ҫӗрпе ҫаранлӑхшӑн тӗрлӗ валеҫмелли йетинитсӑсем тума йурамаст; сӑмахран, уй ҫӗрне йатакран, ҫаранлӑхсене выӗӑхран валеҫме йурамаст.

> Асӑрхамалли. Тепле тӗлсенӗе вырӑнти ӑрасна условисене кура ҫаранлӑхсене валеҫмелли срок тума Кӗпӗҫтӑвкомсене правӑ панӑ.

131. Усӑ куракансем, опӗӑ йе уйрӑм килсем, ҫаранлӑхсене тӗппипех аванлатнӑ пулсан (сӑмахран, шурлӑх ҫӗрсене типӗтни, тата ҫавӑн пек урӑххисене туни), ҫав ҫаранлӑхсем вӗсенӗех йулаҫҫӗ, ҫӗре валеҫҫе танаштарнӑ, йе ҫӗрйӗркеленӗ ӗухне пӑртак кӑларса илсен, ҫӗрне илекеннисен вӗсене усӑ курайман тӑкакшӑн тӳлемелле.

132. Опӗӑ аллинӗи ҫаранлӑхсен ӗиккине, тата ҫаран хуҫайствине отрупла, йе куттӑрла уӗаскӑсем ҫинӗе опӗӑран уйрӑм тытса тӑракан килсен ҫаранлӑхӗсен ӗиккине ҫӗрйӗркеленӗ ӗухне анӗах улӑштарма йурат.

133. Çаранлӑхсене аванлатмашкӑн халӑха мӗлле майсемпе тӑрӑштарасси, тимлеттерессипе çинҫен постановленисем, тӗплӗн калаҫа кӑтартакан правилсем кӑларма Кӗпӗçтӑвкомсене правӑ панӑ; малтан ун çинҫен Кӗпӗрнери çӗр управленисем ӗç тӑратаççӗ.

## IX-мӗш уйрӑм.

## Çӗре халӑхран уйрӑм кастарса илесси.

134. Çӗрпе халӑхла йӗркепе, тата анан уҫаскӑсем кастарса илсе усӑ курнӑ ҫухне кашни кил уйрӑм, йе темиçе кил пӗрле, опҫӑ килӗшшен, çӗрпе усӑ курса тӑракан кивӗ йӗркене пӑрахса кирек мӗнле вӑхӑтра та çӗре уйрӑм кастарса илсе, халӑхран урӑх вырӑна тухса ларма пултарать.

135. Çӗре тӗппипех валеççе танаштарнӑ ҫухне опҫӑри темиçе кил пӗрле, тата уйрӑм килсем те, опҫӑ килӗшмесӗрех опҫӑран тухса ларма, тата валеçнӗ ҫухне мӗн ҫул çӗр тивнине кура хӑйсене тивекен çӗре уйӑрса илме пултараççӗ; çавӑн ҫухне çӗр пахине, паха маррине пӑхса танаштарса касса памалла. Çав уйрӑм кастарса илнӗ çӗр çинҫе кирек мӗлле йӗркепе те усӑ курма йурать.

136. Опҫӑри çӗре тӗппипех валеçмеп, йе танаштарман ҫухне те халӑхран уйрӑлса тухса ларма йурать, анҫӑх апла тумашкӑн тухса ларас текенсем опҫӑри килсен пилӗккӗмӗш ($^1/_5$) пайӗнҫен кайа пулмалла мар (сӑмахран, 250 кил ытларах опҫӑра тухса ларас текенсем 50 килтен кайа мар пулсан, тухса ларма йурать). Ахаҫ выртакан, йе уйрӑм тӑракан çӗр çине, опҫӑ килӗшмесӗрех килсем кирек мӗн вӑхӑтра та тухса ларма пултараççӗ (çакӑн пирки пӗтӗм çӗре валеçмелле килмесен).

137. Килсем опҫӑран тухса ларнӑ ҫухне кашнинҫех çӗр танаштармалли йетинитсӑ (йатакран, ӗçлекерен, йатран, йе урӑхла) тумалла, вара опҫӑран тухса ларакан килсене çӗр мӗн ҫул тивнине танаштармалли йетинитсӑсем тӑрӑх шутласа татса памалла. Танаштармалли йетинитсӑ пур йышши çӗрсемшӗн те (ана çӗрӗшӗн, вӑрмӑн çӗрӗшӗн, тата ыт.) пӗр йетинитсах пулмалла, тата опҫӑран тухаканнисемшӗн те, йулаканнисемшӗн те пӗр пек пулмалла.

138. Çӗр уйрӑм кастарса илнӗ ҫухне икӗ йенне те, опҫӑра йулаканнисене те, опҫӑран тухаканнисене те, çӗрпе усӑ курасси аванрах пулнипе пӑхмалла; урӑхла калаçан, анасем пӗр пӗрин хушшинҫе ан пулҫҫӑр, ытла катара ан пулҫҫӑр, пӗрин çӗрӗ теприн çӗрӗ çине савӑл пек пырса ан кӗтӗр, ҫикисем тӳрӗ, аван, шыв çулӗ—çывӑх путӑр, тата çавӑн пеккисене ыттисене те астумалла.

139. Çӗр опҫи пӗр йӗркене пӑрахса тепӗр йӗркене йышӑнсан, çавӑн ҫухне халӑхран уйрӑм кастарса илес текенсене иртнӗ статйасем тӑрӑх çӗр уйрӑм панӑ пулсан, ун хыççӑн уйрӑм кастарса илес текенсем татах тунӑнсан, çав тухса ларни халӑха çӗре вӑхӑтсӑр валеçмелле тумасан, тата халӑх килӗшшен анҫах тухса ларма йурать.

140. Опҫӑран тухса ларнӑ ҫухне те, халӑхпа çӗр валеçнӗ ҫухне те çак йӗркене тытса тӑмалла:

а) пур ыйтусене те малтан опҫӑн мӑн пуххи сӳтсе йавать;

б) тавлашусем, шалӑпӑсем çук пулсан, опҫӑ постановленине уйесри çӗр управлени рекистратси тунӑ хыççӑн, ӗçе кӗртме йурать; уйесри çӗр управленийы çавнашкал ӗççене ӗç пырсан 14 кун хушшинҫе пӑхса тухмалла;

в) çӗр пирки тавлашусем тухсан, килӗшменнисем опҫӑ постановлени çине çӗр тавлашӑвӗсене пӑхмалли йӗрке тӑрӑх шалӑпӑ пама пултараççӗ; ӗçе тӗппипех пӑхса тухса татса парсан тин çӗр управлени рекистратси тӑвать.

X-мĕш уйрăм.

### Ĕçлесе усă курмалли çĕрсене çирĕплетессипе йĕркелесси.

141. Вулăссем, йалсем, ытти йалхуçайстви пĕрлешĕвĕсем усă курса тăракан пур çĕрсем те, тата халăха валеççе памалли çĕрсенђен çĕр оркăнĕсем, йе канашсен сиесĕсем (вулăсри, уйесри, кĕпĕрнери) постановлени тунă тăрăх панă çĕрсем çĕре ĕçлесе усă курассин тĕп саккунĕ тухнă кунтан (1922 çулти çу уйăхĕн 22-мĕшĕнђен) пуçласа усă куракансем çумне йаланах ĕçлесе усă курма çирĕпленеççĕ.

142. Çав вăхăтранах шутласа вулăспа вулăс, йалпа йал хушшинђи çĕрсене ђрĕксĕрлесе танаштарма йурамаст; малашне çĕре йĕркене кĕртес ĕçе вак анасене, катари анасене, тата çавăн пеккисене пĕтерсе халăха усă курма аванрах пулмашкăн анђах тума йурат.

143. Хăш районсенђе йалсем, пĕрлешўсем хушшинђе çĕр йĕрки пăтрав мар, унта çĕр оркăнĕсĕм çĕре рекистратси анђах туса тухаççĕ: усă куракан çĕрсен ђиккисене, пыршăне паллă тăваççĕ, халăха çавăн пирки хутсем (токкумĕнтсем) параççĕ.

## II-МĔШ ПАЙ.

# Хула çĕрĕсемпе патшалăх пурлăхĕн çĕрĕсем.

I-мĕш уйрăм.

### Хула çĕрĕсем.

144. Çак Котексă тухнăранпа хула ђиккин шал йенђи çĕрсем пурте хула çĕрĕ тесе шутланаççĕ. Кунтан пуçне тата вулăс çĕрĕсем, малалла кăтартнисем, хуласем усă курса тăма вĕсем çумне çирĕпленеççĕ. Вулăссенђен çĕр илсе çĕнĕ ђикĕ туса хула территторине сарма йурат, ăна 146-мĕш ст. кăтартнă йĕркесем тăрăх тумалла.

145. 1922-мĕш çулăн çурла уйăхĕн 1-мĕш кунĕђђен хула канашĕ пăхса тăнă çĕрсен (çуртйĕр лартнисен те, ларманисен те) тулашĕнђи крамĕ хула ђикки тесе шутланат. Хула ђикки çумĕнђи тул йенђи çĕрсене, ĕлĕк хула çĕрĕ пулнисене, вĕсемпе хресђенсем, йе хулари ĕçлекенсен орканисатсийĕсем усă курмаççĕ пулсан, хула ђиккин шал йенђе тесе шутламалла.

Асăрхамалли. 1. Пĕтĕм хула çĕрĕн, йе пайĕн ђиккине çĕр çине, йе план çине тумалла пулсан, хула канашĕ, йе таврари халăх сайавлени тунă тăрăх çĕрйĕркелў ĕçне тумалли йĕркесемпе тумалла.

Асăрхамалли. 2. Çак паракрахра кăтартнă хула ђиккисене тăвас ĕççене ытти ĕççенђен малтан тумалла.

146. Хулана аслатас пирки хула ђиккине улăштарса çĕнĕ ђикĕ тумалла пулсассăн, çавăн çинђен ĕç йе хула канашĕ, йе Патшалăхри Ĕççен Комиссариађĕ пуçласа йарат. Çĕнĕ хула ђикки тăвас ĕçе çĕрйĕркелў правĕлĕсем тăрăх тăвас пулат. Ĕç çураçуллă пулмасан Тĕпĕçтăвком Преçитиумĕ татса парат. Çĕнĕ хула ђикки тăвас пройектăна, çирĕплетнĕ хыççăн, çĕр оркăнĕсем ĕçе кĕртеççĕ.

147. Хула ђиккинђен шалти çĕре мĕлле йўнеçтермеллине ăрасна саккунсем кăтартса параççĕ. Çĕр оркăнĕсем ытти çĕрсем тĕлешĕнђен кирек мĕн тума хушни хула çĕрĕсене тĕкĕнме пултараймаççĕ.

Асăрхамалли. Çак статйара кăтарнă саккунсемпе правĕлсене Патшалăхри Ĕççен Комиссариађĕпе Çĕрĕç Комиссариађĕ туса параççĕ те, вĕсене Тĕпĕçтăвком Преçитиумĕ кăларат.

148. Хула ҫикки тулашӗнҫи пур ҫӗрсем те, вӗсемпе кирек кам усӑ курайӗ пулсан та, вулӑс территторине кӗреҫҫӗ, вӗсене ҫӗр оркӑнӗсем пӑхса тӑраҫҫӗ, вӑл ҫӗрсем Ҫӗр котекси тӑрӑх тунӑ постановленисене пӑхӑнаҫҫӗ; ҫав ҫӗрсенҫен хулари коммунаҫнӑ претприйаттисем (совхоссем, шӑварса тӑвакан уйсем, вотопроводсем, тата ҫавӑн пеккисем) усӑ курса тӑракан ҫӗрсем ҫав претприаттисем ҫумне ҫирӗпленеҫҫӗ.

149. Коммунаҫнӑ управлени шутне кӗмен уҫрештенисемпе претприаттисем усӑ курса тӑракан хула ҫикки тулашӗнҫи ҫӗрсем, ҫав уҫрештенисемпе претприаттисене саккун тӑрӑх панисем, вӗсем ҫумне ҫирӗпленеҫҫӗ; хула сыннисене йалхуҫайствилле ӗҫсем туса тӑрса усӑ курма саккун тӑрӑх панӑ ҫӗрсем ҫӗрпе усӑ курмалли йӗркесем тӑрӑх усӑ курма вӗсен аллинҫе йулаҫҫӗ; ҫав ҫӗрпе усӑ курас тӗлӗшрен вӑл сынсем пӗрлешше ҫӗр опҫи тӑваҫҫӗ.

150. Малашне хула ҫиккине кӗрес ҫӗрсем ҫине ҫуртйӗрсем йӗркесӗр ҫавӑрасси ан пултӑр тесе, хула канашшене ҫав хула ҫикки тулашӗнҫи ҫӗрсем ҫине те ҫуртйӗр тутармалли плансем тума, правӑлсем кӑларма правӑ панӑ.

Ҫав плансемпе правӗлсене хунӑ йӗрке тӑрӑх ҫирӗплетнипе халӑха ун ҫинҫен пӗлтернӗ кунтан пуҫласа, плансемпе правӗлсене урлӑ пыракан ҫӗнӗ ҫуртсем тума та, ӗлӗк тунӑ ҫуртсене аслатма та йурамасӗ, вӑхӑтлӑх, ҫӑмӑл ҫуртсем анҫах тума йурайӗ. Малта кӑтартнӑ плансем тӑрӑх ҫӗре хулана памалла пулсассӑн, ҫав тунӑ ҫуртсемпе аслатнӑ ҫуртсене тӑваканнисен вӑйӗпе куҫарттармалла.

151. Хула ҫикки ҫумӗнҫи ҫӗр ҫине ларса тула пуҫласан, йе коммунаҫнӑ уҫрештенисемпе претприаттисем йышӑнса пӗтерсен, ҫав ҫӗрсене хула ҫикки ӑшне кӗртмешкӗн ҫикке куҫараҫҫӗ; вӑл ӗҫе ҫӗрйӗркелӳ ӗҫӗсене тӑвакан йӗркепе тӑваҫҫӗ. Ҫак саккунра кӑтартнӑ тӗлсенҫе (случаи) ҫӗрйӗркелӳ ӗҫне тунӑ ҫӗре хула канашӗпе вуӗҫтӑвком претставиттӗлӗсене, ҫак ӗҫ тивекен уҫрештенисене, орканисатсисене, претприаттисене, ҫӗр опҫисене, тата ҫӗрпе уйрӑмӑн усӑ куракан сынсене ҫӗнмелле.

152. Ҫак уйрӑмри постановленисем хула йеверлӗ тесе шутлакахан пур йалсем ҫине те сарӑлаҫҫӗ.

153. Ҫӗрӗҫ Комиссариаҫӗпе Патшалӑхри Ӗҫсен Комиссариатне пӗр пӗрипе ҫураҫҫа ҫак саккуна ӗҫе кӗртес пирки правӗлсем, инструксисем кӑларма правӑ панӑ.

## II-мӗш уйрӑм.

# Патшалӑх пурлӑхӗн ҫӗрӗсем.

### I-мӗш сыпӑк.

### Тӗп йӗркесем.

154. Патшалӑх пурлӑхӗн ҫӗрӗсем шутне уйрӑмӑн ӗҫлесе тӑракансене, пӗрлешӳсене, хуласемпе хуласем йеверлӗ йалсене усӑ курма панӑ хыҫҫӑн пӑтшалӑхӑн ҫӗр хонтӗнҫе йулнӑ ҫӗрсем пурте кӗреҫҫӗ.

155. Патшалӑх пурлӑхӗн ҫӗрӗсем шутне вӑрман айӗнҫи, ту айӗнҫен кӑлармалли йапаласем айӗнҫи, ҫукунҫулсем, крепӑҫҫем, тата вӑрҫӑпӑн тунӑ ҫавӑн пек йапаласем айӗнҫи ҫӗрсем кӗмеҫҫӗ. Ҫав ҫӗрсем ҫавнашкал ветӑмствӑсен управленисем аллинҫе тӑраҫҫӗ. Вӑл ҫӗрсене мӗншӗн йышӑннӑ, ҫавӑншӑн кирлӗ мар пулсан, вӗсем патшалӑх пурлӑхӗн ҫӗрӗсем шутне кӗреҫҫӗ.

Асӑрхамалли: Спетсиаҫнӑ ӗҫҫемшӗн ҫӗр касса парас пулсан, тата вӗсене патшалӑх пурлӑхӗн ҫӗрӗсем шутне куҫарас пулсан, ӑна ҫӗрйӗркелӳ ӗҫӗсем тумалли йӗркесем тӑрӑх тӑвас пулайӗ.

156. Патшалăх пурлахĕн çĕрĕсем шутĕнҫе çапла çĕрсем пур: а) канаш хуçавстйисем (совхоссем); б) тупăшлă статйа çĕрĕсем (вĕсенҫи çĕр уҫаскисене ĕçлесе усă курма, хуçайствăсем тума параççĕ), тата в) патшалăхăн саппас çĕрĕн никама та усă курма паман уҫаскисем.

157. Патшалăх пурлăхĕн çĕрĕсене Çĕрĕç Комиссариаҫĕ, тата унăн оркăнĕсем пăхса тытса тăраççĕ; çав çĕрсем çинҫе йе тӳрех хуçайствăсем туса усă кураççĕ, йе вĕсене ăрасна йĕркесем тăрăх патшалăх, халăх оркаписатсисене, уҫрештенисене, претприаттисене, йе уйрăм ĕçлесе тăракансене усă курма параççĕ.

> Асăрхамалли: Патшалăх пурлăхĕн çĕрĕсене патшалăх уҫрештенисене, оркаписатсисене, претприаттисене, тата уйрăм ĕçлесе тăракан çынсене мĕлле йĕркепе, условисемпе, тата мĕн вăхăтлăха памаллисене Çĕрĕç Комиссариаҫĕ туса Халăх Комиссарĕсен Канашĕ çирĕплетнĕ ăрасна правĕлсем кăтартаççĕ,

158. Патшалăх пурлăхĕн çĕрĕсене çĕрĕçлекенсене, тата вĕсен пĕрлешĕвĕсене (çĕрсĕррисене, сахал çĕрлисене çĕр парса, çĕнĕ çĕре куçарса) пăрмайах усă курма парса пынă майĕпе вĕсене патшалăх пурлăхĕн çĕрĕсен шутĕнҫен кăларса халăх усă куракан çĕр шутне çырса пымалла. Патшалăх пурлăхĕн çĕрĕсемпе усă курнă ҫухне тухакан тавлашусене çавăн пирки йури тунă йĕрке тăрăх шутласа татаççĕ.

159. Кама та пулин пĕрпĕр ĕç тума, йе вăхăтлăха панă патшалăх пурлăхĕн çĕрĕсем илекеппине малашне кирлĕ мар пулсан, йе панă срокĕ тухсан, хыснана таврăнаççĕ, вĕсем мĕлле расретра пулнă, çав расретах çыраççĕ (155 статйари пек).

II-мĕш сыпăк.

## Канаш хуçайствисем (совхоссем).

160. Канаш хуçайствисем (совхоссем) вĕсем йалхуçайствине вăйлатмашкăн наукпа техникă кăтартнă пек никĕс хурса йама, çĕрĕçне пĕрлештерме тунă йалхуçайстви претприаттийĕсем. Çав тĕленнĕ шухăшсене ĕçе кĕртме вĕсен çитес вăхăтсенҫе хăйсен йалхуçайстви пултарăмне (производство) вăйлатас, аванлатас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ, сăнаса туса пăхса кăтартаççĕ, çĕр кулҭтурин хаклă йапалисене (аван ăратлă выҭăхсене, аван вăрлăхсене, тата çавăн пеккисене) тăваççĕ, кусенҫен пуçне тата хăйсем ĕçлесе кăтартса таврари халăхăн йалхуçайстви пултарăмне вăйлатма тăрăшаççĕ, йе ăс, сывлăх тĕлĕшĕнҫен тĕрлĕ усăллă йапаласем (шкулсем, театтăрсем, курортсем, санатторисем, тата ыттисене) тăваççĕ.

161. Çак Котексă тухнă вăхăтранпа пур канаш хуçайствисене те, 148-мĕш статйара кăтартнисемсĕр нуçне, Çĕрĕç Комиссариаҫĕпе унăн оркăнĕсем пăхса тăраççĕ.

> Асăрхамалли. Совхоссемпе усă курса тăракан уҫрештенисем, оркаписатсисем, тата çĕр оркăнĕсем пĕр пĕрин тĕлĕшĕнҫен мĕлле пулмаллине, пĕр пĕрин хушшинҫе мĕлле ĕçлемеллине Çĕрĕç Комиссариаҫĕ туса Халăх Комиссарĕсен Канашĕ кăларнă правĕлсем кăтартса параççĕ.

162. Çĕр оркăнĕсем усă курса тăракан канаш хуçайствисем те, токăвăр тăрăх усă курма панисем те хăйсен пултарăм ĕçĕпе çĕр кулҭтури ĕçĕнҫе вырăнти çĕрĕçлекен халăха сывăх тăмалла, çавна çĕр оркăнĕсен астуса тăмалла. Çавăн пирки вĕсен çĕр кулҭтури ĕçĕсене халăхпа пĕрлешпе тумалла. (Ăратлăх выҭăх, вăрлăх хунатаракан вырăн, ĕнесене, лашасене ҫупгармалли, ĕçлеме машинисем памалли вырăнсем, йалхуçайстви хатĕрĕсене йусамалли мастерскойсем, тата çавăн пек ыттисене тумалла).

163. Пур канаш хуҫайствисем те ҫӗр оркӑнӗсемпе токӑвӑр тӑрӑх тытӑнса тӑраҫҫӗ; ҫав токӑвӑрсем ҫинҫе вырӑнти условисене кура токӑвӑр срокӗ хушшинҫе мӗлле ҫӗр куҫттури ӗҫӗсем тумаллине кӑтартмалла. Кунтан пуҫне тата ҫӗртен, хатӗрсенҫен, ҫуртсенҫен вӗсене пӗтермелле усӑ курсан токӑвӑр ӳтме кирлине токӑвӑр ҫинҫе кӑтартмалла.

Асӑрхамалли. 1. Ҫак Котексӑ тухиҫҫен совхоссемпе усӑ курса тӑпӑ уҫрештенисемпе оркакисатсисен, хӑйсем усӑ курасси ҫинҫен токӑвӑр туман пулсан, 3 уйӑх хушшинҫе ҫавӑн ҫинҫен ҫӗр оркӑнӗсенҫе токӑвӑр тутармалла; унсӑрӑн вӗсем хӑйсем усӑ курса тӑрас правӑна ҫухатаҫҫӗ.

Асӑрхамалли. 2. Ҫак статйана 148 статйара кӑтартнӑ совхоссем кӗмеҫҫӗ.

164. Патшалӑхӑн ҫӗр хонҫӗн ҫӗрӗ ҫинҫе ҫӗнӗ канаш хуҫайствисем Ҫӗрӗҫ Комиссариаҫӗ хӑй тӳрех хушнипе, йе вырӑнти ҫӗр оркӑнӗсем ӗҫ тӑратнӑ тӑрӑх вӑл хушшан пулса кайаҫҫӗ, йе Ҫӗрӗҫ Комиссариаҫӗ ирӗк панипе патшалӑхпа халӑх уҫрештенийӗсем, претприаттийӗсем тӑваҫҫӗ.

III-МӖШ ПАЙ.

# Ҫӗрйӗркелӳпе ҫӗнӗ ҫӗрсене куҫҫа ларасси.

## I-мӗш уйрӑм.

## Ҫ Ӗ Р Й Ӗ Р К Е Л Ӳ.

### I-мӗш сыпӑк.

### Тӗп йӗркесем.

165. Ҫӗрйӗркелӳн сатаҫҫисем ҫаксем: вӑл усӑ куракан ҫӗрсене йӗркене кӗртет, ҫӗрпе усӑ курас правӑсене кура, тата тӗрлӗ ӗҫҫем тума ҫӗр кирлине пӑхса ҫӗнӗ ҫӗрсем тӑвать.

166. Ҫак постановленисен йӗркипе ҫапла ҫӗрйӗркелӳ ӗҫӗсене тӑваҫҫӗ: а) патшалӑх оркакисатсийӗсене, уҫрештенийӗсене, претприаттийӗсене, хуласене, хула манерлӗ йалсене, ҫӗрӗҫлекенсен пӗрлешӗвӗсене, тата ӑрасна условисем тӑрӑх (тара парса, консеҫҫи тӑрӑх, тата урӑх майпа) ытти уҫрештенисене, опҫӑсене, уйрӑмӑн усӑ куракан ҫынсене усӑ курма ҫӗр касса параҫҫӗ; б) тӗрлӗ ӗҫ пирки кирлӗ (куҫҫа ларма, консеҫҫи пама, ҫаранлӑх, тата ыттисене тума) саппас ҫӗрсем т ӑ в а ҫ ҫ ӗ, ҫӗрсене пӗр хонтӑран тепӗр хонта куҫараҫҫӗ; в) патшалӑх, йе халӑх ӗҫӗсемшӗн ҫӗр кирлӗ пулсан, ҫӗр к ӑ л а р с а п а р а ҫ ҫ ӗ; г) хула ҫиккисене тӑваҫҫӗ; д) ҫӗр опҫисем усӑ курса тӑракан ҫӗре в а л е ҫ ҫ е параҫҫӗ; уйрӑм килсене, тата ушкӑнланнӑ килсене ҫӗр уйрӑм касса параҫҫӗ; ҫӗр опҫин тӗрлӗ йурӑхлӑ ҫӗрӗсене пӗтӗм ҫӗрне, йе пайне куттӑрла, йе отрупла уҫаскӑсем туса танаштарса параҫҫӗ; уйрӑм хуҫайствӑсен ҫӗрӗсене валеҫҫе параҫҫӗ; е) сапӑнҫӑк анасене пӗрлештереҫҫӗ, катарисене сывӑха кӳрсе параҫҫӗ, пӗр йал ҫӗрӗ тепӗр йал ҫӗрӗ хушшине пырса кӗнине, ҫӗр ҫиккисене тӳрлетсе параҫҫӗ; ж) ҫулсем касса параҫҫӗ, кив ҫулсене урӑх вырӑна куҫараҫҫӗ, йе пӗтереҫҫӗ, вырӑх шӑвармалли вырӑнсем касса параҫҫӗ, тӗппипех йусанӑ (мелиоратси) тӗрлӗ йурӑхлӑ ҫӗрсене урӑх вырӑна куҫармалла килсен, куҫарса параҫҫӗ; з) йалсене мӗлле йӗркепе (планпа) лармаллине кӑтартса параҫҫӗ; и) вулӑс ҫиккисем тӑваҫҫӗ, улӑштармалла пулсан улӑштарса параҫҫӗ.

167. Çĕрйĕркелӳ ĕçĕсене вырăнти çĕрйĕркелекен уҫрештенисем полномоҫи панă çĕрйĕркелекен мишавайсем тăваççĕ; ку ĕççене Çĕрĕç Комиссариаҫĕ пăхса, кăтартса, тĕрĕслесе тăраҭ.

168. Çĕрйĕркелекен уҫрештенисем çĕрйĕркелӳ ĕçĕсене çапла ҫухне хăйсем пуçарса йарса тутараççĕ: а) пĕрпĕр ĕççем валли саппас çĕр (земли специального назначения) тумалла пулсан, вăл çĕр улшăнсан; тата б) пĕрпĕр районра çĕрпе усă курас ĕç йĕркеллĕ мар пирки хуçайствăна сийен тунине, йе тавлаштарса тăнине çĕрйĕркелекен уҫрештенисем пĕтермелле тусан, ытти ҫухне çавна тутарас текенсем ыйтни тăрăх анҫах тумалла.

169. Çĕрйĕркелеттерекенсене çак Котексă мĕн ҫул çер илме правă параҭ, вĕсем çавăн ҫухлĕ анҫах илме пултараççĕ. Вĕсем хăйсем усă курса тăнă çĕр вырăнне çавăн йышши çĕрех (ана çĕрĕ те—ана çĕрĕ, çаранлăх та —çаранлăх) урăх çĕрте илме пултараççĕ, анҫах çавăн ҫухне çĕр тĕсне пăхса пахаласа танаштармалла. Ĕлĕк усă курса тăнă çĕрсене халăх çураçмасăр урăх йышши çĕрсемпе (сăмахран, ана çĕрне хăртнă çĕрĕне, йе йурăхсăр çĕрпе) улăштарма тĕрĕс çĕрйĕркелӳ тума май килмесен анҫах йураҭ.

Асăрхамалли. Çак статйа тăрăх ĕç тунă ҫухне пулакан тавлашусене çĕр комиççисем çĕрйĕнкелӳ йĕркипе пăхса тухаççĕ.

170. Çĕрйĕркелеттерекенсене мĕн ҫул çĕр памаллине çаксем тăрăх пĕлмелле: а) патшалăх оркаписатсисене, уҫрештенисене, претприаттисене, хуласене, хула манерлĕ йалсене çĕр касса панă ҫухне—çак Котексăн 145-мĕшпе 146-мĕш статйисене пăхса; б) опҫăн, тата халăхран уйрăм тăракан килсен çĕрĕсене йĕркене кĕртнĕ ҫухне—вĕсене саккун тăрăх усă курма панă çĕр мĕн ҫуллине пăхса; в) çĕр опҫинҫи çĕре танаштарнă, валеçнĕ, кăларса панă ҫухне—çĕр йĕркелеттерекенсене кашнине тӳперен мĕн ҫул çĕр тивнине пăхса; г) çĕнĕрен куçça, сапăнса лармалли саппас çĕре валĕçнĕ, касса панă ҫухне —тунă норăмсем тăрăх, тата çĕр илекенсем мĕн ҫул çĕр ĕçлесе усă курма пултарнине пăхса; д) уҫрештенисене, опҫăсене, уйрăм çынсене ăраспа йĕркепе (тара, консеççи парса, тата урăх майпа та) çĕр панă ҫухне—токăвăр условисем тăрăх, тата çак тĕлĕшпе кăтартнине пăхса.

171. Йĕркене кĕртмелли çĕр ытти çĕрсемпе çыхланнă пулсан (анасем пĕр пĕрин хушшинҫе сапаланса выртни, инçетри çĕрсем, тата çавăн пеккисем), çав çĕрсене пурне те пĕр вăхăтра, пурне пĕрле йĕркене кĕртеççĕ. Çапла ҫухне çĕрйĕркелеттерекенсене çĕр мĕн ҫул тивессине иртнĕ статйара кăтартнă майсемпе пĕлеççĕ.

172. Çĕре йĕркене кĕртес тĕлĕшпе тĕрлĕ ĕççем тунă ҫухне çав ĕççем тĕкĕнекен йенсен пурин те пулмалла, йе вĕсем хăйсем вырăнне пур ĕççене те тума правă парса претставиттĕлсем йараççĕ (çĕр опҫисем уполномоҫҫăнисем суйласа, çĕрпе опҫăран уйрăм усă куракансем — поверĕннисем, оркаписатсисем, уҫрештенисем, претприаттисем, тата çавăн пеккисем претставиттĕлсем йараççĕ).

Асăрхамалли. Патшалăх уҫрештенисен çĕрне йĕркене кĕртнĕ ҫухне вĕсем кашнинҫех çав çĕрйĕркелӳ ĕçĕнҫе çӳреме çав çĕрсен (сăмахран, совхоссен) управҫашҫисене, йе çавăн пирки суйланă çынсене йараççĕ.

173. Вулăссен ҫиккине тунă, йе улăштарнă ҫухне ҫикĕ çумĕнҫи çĕрпе усă куракансенҫен пуçне çав ĕç тивекен вулĕçтăвкомсен претставиттĕлĕсене ҫĕнеççĕ; тăвакан, йе улăштаракан ҫикĕ çав вăхăтрах уйес, йе кĕпĕрне ҫикки пулсан, çав уйессен, кĕпĕрнесен ĕçтăвкомĕсенҫен претставиттĕлсем ҫĕнеççĕ.

174. Çĕрйĕркелӳ ĕçĕсене тăвас пулсан, çавăнта пымалли çынсене ун çинҫен иртерех пĕлтермелле, хунă вăхăта вĕсен вăхăтра çитмелле пултăр.

Каçарма тивĕçлĕ сăлтавсем пирки вĕсем вăхăтра çитеймен пулсан, çĕрйĕркелӳ ĕçĕсене вĕсем пыраҫҫен тунă пулсан, çав ĕçе тепĕр хут пăсса тутарасси çинҫен ыйтма пултараççĕ, анҫах пырас çын хăйĕн ирĕкĕпе мар, тĕрлĕ пысăк сăлтавсем (вăйлă ҫирлĕ выртни, шар курни, тата çавăн пеккисем) пирки вăхăта çитейменнине кăтартсан тин, тунă ĕçе тепĕр хут пăсса тума йурать.

175. Çĕрйĕркеленĕ ҫухне мĕн пулнине пĕтĕмпех пăхса тăмашкăн çĕрйĕркелекенсем халăх шанакан çынсене хăйсен ирĕкĕпе кама ҫĕнес тенĕ, çавсене ҫĕнме пултараççĕ.

II-мĕш сыпăк.

## Çĕрйĕркелес пирки тухнă тăкаксене сапласси çинҫен.

176. Çĕрйĕркелекен уҫрештенисем çĕвйĕркелӳ ĕçĕсене кама усăшăн тăваççĕ, ĕç тунăшăн çавсене тӳлеттереççĕ. Тума хушнă тăрăх пĕрпĕр ĕççĕн (кууçа ларма, консеççи тума, тата ыт.) саппас çĕр йатарласа тумалла пулсан, çав саппас çĕре камшăн тунă, тăкакне çавăн ҫăтмалла, патшалăхшăн пулсан—патшалăхăн, халăхшăн пулсан—халăхăн.

Асăрхамалли. Çĕрйĕркелӳ ĕçĕсене тунăшăн мĕн ҫул укçа, тата мĕлле йĕркепе илмеллине, пухăннă укçана мĕлле усрамаллипе тăкак кăлармаллине ăрасна правĕлсем кăтартаççĕ.

177. Çĕрйĕркелӳ ĕçĕсене тунăшăн укçа тӳленинҫен пуçне çĕрйĕркелеттерекенсен çĕрйĕркелекенсене çаксене туса памалла: а) пурăнма, ĕçлеме лайăх çуртсем тупса памалла; б) ĕçлеме, мишавай паллисем тума кирлĕ маттерйалсем тăратмалла; в) çĕрйĕркелӳ тума кирлĕ хатĕрсене (инструментсене), маттерйалсене турттарса çӳреме лавсем, тата г) ĕçлекенсем памалла.

178. Йĕркене кĕртмелли çĕр мĕн ҫулне, тата мĕлле ĕççем тунине пăхса иртнĕ стаййара кăтартнă повиннăççене çĕрйĕркелеттерекенсем çине сулса йамалла. Çĕре йĕркелеме хушнă тăрăх йĕркеленĕ ҫухне (166-мĕш ст., „б" пункт) тухнă тăкаксене çĕрйĕркелӳ ĕçне йерекенсем ирĕклĕн тӳлемесен, мĕн ҫул тивнине малта кăтартнă пек шутласа, вĕсенҫен атминистратси йĕркипе тӳлев шырамалла.

III-мĕш сыпăк.

## Çĕрйĕркелӳ ĕçĕсене тăвас йĕрке.

179. Çĕрйĕркелӳ ĕçĕсене çапла йĕркепе тумалла: 1) çĕрйĕркелӳ ĕçне тăвассине пуçарса йамалла; 2) çĕрйĕркелӳ ĕçне хатĕрлемелле, пройектине тумалла, çĕрйĕркелеттерекенсене кăтартмалла; 3) çĕрйĕркелӳ пройектине çирĕплетмелле, мишавай паллисене вырăна лартса ĕçне тумалла; 4) çĕрйĕркелеттерекенсене хутсем (токумĕнтсем) туса памалла.

180. Çĕрйĕркелӳ ĕçне хăйсене усăшăн йенсем пуçарса йараççĕ пулсан, вăл ĕçе тăвасси çинҫен хут çине çырса çĕрйĕркелекен уҫрештенисене памалла; çĕрйĕркелекен уҫрештенисем хăйсем пуçарса йараççĕ пулсан, вăл ĕç çавăн çинҫен постаньовлени тунă хыççăн пуçланса кайать.

Асăрхамалли. Çĕрĕçлекенсем хăйсен çĕрне йĕркелеттерешшĕнни çинҫен сăмахпа каласа та ĕç пуçарса йама пултараççĕ. Апла ҫухне çĕрйĕркелекен уҫрештенисен уполномоҫҫăнисем умĕнҫе каласа парса вĕсене çыртармалла.

181. Çĕрĕçлекенсен çĕрне йĕркелесси çинҫен, тата пĕтĕм уйес тĕлĕшшĕн уҫрештенисен, орканисатсисен, претприеттисен çĕрĕсене йĕркелесси çин-

ҫен сайавлени уйесри ҫӗрйӗркелӳ ӳҫрештенине памалла. Кӗпӗрне, йе патшалӑх тӗлӗшшӗн ҫӗрсене йӗркелесси ҫинҫен кӗпӗрнери, йе ҫенттӑрти ҫӗрйӗркелекен ӳҫрештенисенҫен ыйтмалла.

182. Ҫӗрйӗркелекенсем ҫӗре саккун хушнине хирӗҫ пырса, йе хуҫайствӑпа пултарӑм тӗлӗшӗнҫен сийен майлӑ йӗркелеттересшӗн пулсан, ҫапла ыйтнине ҫӗрйӗркелекан ӳҫрештенисен тума йурамасӑ. Тумани ҫинҫен 2 ернеллӗх срокра аслӑрах ӳҫрештенине шалӑпӑ парас пулаӑ.

183. Ҫӗйӗркелесси ҫинҫен ӗҫ пуҫарса йапӑ йенӗ хӑйӗн ӗҫне пӗтерессн ҫинҫен ӗҫӗ кирек мӗлле ҫухне те ыйтма пултараӑ, ӗҫе пӗтернӗ вӑхӑҫҫен мӗн ӗҫленишӗн укҫа тӳлет. Анҫах ӗҫе пӗтересси ҫинҫен ҫӗрйӗркелӳ пройектине ҫирӗплетсен тин каласан, йе ӗҫе ыттисем малалла йарасшӑн пулсан, ӗҫе малалла тума йураӑ. Ытти йенӗсен ҫӗрне йӗркенӗ кӗртнӗ ҫухне ӗҫе кайалла илнӗ йенӗн ҫӗрне те йӗркене кӗртсен, ҫавӑн пирки пулнӑ тӑкаксене вӑл ыттисемпе танах ҫӑтаӑ.

184. Ҫӗрйӗркелӳ ӗҫне хатерленӗ ҫухне ҫаксене тӑваҫҫӗ: йӗркелемелли ҫӗр мӗн ҫулне, мӗллине кӑтартаҫҫӗ, йӗркелемелли вырӑн мӗллине пӑхса тухаҫҫӗ, ҫӗр тытас правӑсене пӗлеҫҫӗ, ҫӗрйӗркелеттерекенсем мӗлле йӗркелеттерешшӗннине пӗлеҫҫӗ, тата ҫав вырӑна мӗлле майпа аванрах, майлӑрах, тӗллӗрех йӗркелессин малтанхи пройектине тӑваҫҫӗ.

Ҫав ӗҫе тунӑ хыҫҫӑн ҫӗрйӗркелекен мишавай кирлӗ плансене туса токлат хатӗрлет, ҫӗрйӗркелеттерекенсене кӑтартаӑ, вара вӗсен сайавленисемпе шалӑпӑсене (весем пулсан) хурса токлатне ҫӗрйӗркелекен ӳҫрештенине тӑратаӑ.

> Асӑрхамалли. Ӗҫ хатӗрленӗ ҫӗрте кирлӗ пулсан, акрономсене, хитротехниксене, тата ытти ӑстасенӑ ҫӗнеҫҫӗ.

185. Ҫӗрйӗркелекен мишавай тӑратнӑ токлата пӑхса тухсан, тата тавлашусемпе шалӑпӑсене сӳтсе йавса татсан, ҫӗрйӗркелекен ӳҫрештени ӗҫе малалла тумалли ҫинҫен, йе хушса ҫырмалла пулсан, кайалла тавӑрса памалли ҫинҫен постановлени тӑваӑ, вара мӗнмӗн хушса ҫырмаллине кӑтартса ӗҫе тавӑрса параӑ; йе ӗҫ ҫӗрйӗркелӳ сатаҫҫисемпе килӗшмесен, ӑна пӗтерме йараӑ.

> Асӑрхамалли. Ҫӗрйӗркелекен мишавайсем ӗҫе хатӗрленӗ хыҫҫӑн ҫӗрйӗркелекен ӳҫрештенисем пӑхса тӗрӗслемесӗрех, ҫав ӳҫрештенисем ҫӗрйӗркелӳ пройектине тӳрех тутарма пултараҫҫӗ.

186. Ҫӗрйӗркелӳ пройектине т у н ӑ ҫухне ҫаксене тӑваҫҫӗ: ҫӗрйӗркелеттерекенсен прависене, саккунлӑ инттересӗсене, тата ҫӗрйӗркелӳн хуҫайствӑпа техникӑ правӗлӗсене тытса тӑрса вӗсене ҫӗр хӑш вырӑнсенҫе касса памаллине кӑтартаҫҫӗ, тата вӑл ҫӗрсене ҫӗрйӗркелӳн пройектӑ планӗ ҫине ӳкереҫҫӗ. Ҫӗрсен тӑвас ҫиккисем вырӑнне вӑхӑтлӑх паллӑсем лартаҫҫӗ, тавлашусем, шалӑпӑсем ҫук пулсан, паллисене пуҫӗпӗх лартаҫҫӗ.

187. Ҫӗрйӗркелӳн тунӑ пройектине йенӗсене план ҫинҫе те, вырӑнӗнҫе те туса кӑтартаҫҫӗ, ҫавӑн пирки пӑртаккул ҫыраҫҫӗ. Ҫавӑн ҫухне ҫӗрйӗркелекен мишавайӑн йенсем тӑвас тенисене май килнӗ таран килӗштерсе тума тӑрӑшмалла, анҫах ҫӗрйӗркелӳ правӗлӗсене хирӗҫ пырса мар; кирлӗ пулсан пройектине улӑштарса йусамалла.

188. Ҫӗрйӗркелӳ пройектине кӑтартни ҫинҫен ҫырнӑ пӑртаккул ҫине пӗтмен тавлашусене, сайавленисене, шалӑпӑсене ҫырса хураӑ те, пройекта кӑтартнӑ хыҫҫӑн ернерен ытла вӑхӑт иртермесӗр ҫӗрйӗркелекен мишавай пӗтӗм ӗҫе, тавлашусене татса пани мӗнӗпех, ҫӗрйӗркелекен ӳҫрештенине тӑратаӑ.

189. Мишавай тӑратнӑ пройекта, тата ҫав пройекта тӑратнӑ пирки пулнӑ тавлашусене, шалӑпӑсене ҫӗрйӗркелекен ӳҫрештени пӑхса тухаӑ те,

тӳрлетсе хушса тунӑ пройектӑна йышӑнса ӗҫе кӗртмелле тӑват, йе тепӗр хут пӑсса тумалла тӑват, мӗн улӑштарса ҫырмаллине кӑтартса парат.

190. Ҫӗрйӗркелӳ пройектине ӗҫе кӗртнӗ ҫухне ҫакна тӑваҫҫӗ: ҫӗрйӗркелеттерекенсене пройекта кӑтартнӑ ҫухне йӗркелемелли ҫӗр ҫиккине паллӑсем пуҫӗпех лартман пулсан, ҫав паллӑсене лартаҫҫӗ.

191. Ҫӗрйӗркелӳ пройектине ӗҫе тӗрӗс кӗртнӗ хыҫҫӑн, ӑна ҫӗрйӗркелекен уҫрештени тӗппипех ҫирӗплетет. Ҫав ҫирӗплетес пирки тунӑ постановленире пройектӑ планӗ ҫинҫине кирлӗ тӗлтисене асӑнса ҫаксене кӑтартмалла: а) кам хушнипе, хӑҫан, мӗлле вырӑнта, мӗлле ҫӗрйӗркелӳ ӗҫӗсене тунине; б) мӗлле ҫӗрсене (мӗн ҫул ҫӗр, хӑш вырӑнта, ҫиккисем), кама, мӗн тума касса панине; в) ҫӗнӗ ҫикӗ туса касса панӑ ҫӗрсемпе хӑҫан, мӗлле йӗркепе, тата мӗлле условисене тытса тӑрса усӑ кура пуҫламаллине; г) ҫак ҫирӗплетнӗ ҫӗрйӗркелӳ пройекти тӑрӑх касса панӑ ҫӗрсемпе усӑ курнӑшӑн усӑ куракансемшӗн мӗлле ӑрасна условисем, повиннӑҫҫем, полномоҫҫисем тунине; д) ҫӗрйӗркелес пирки тухнӑ тӑкака ҫӗрйӗркелеттерекенсем мӗлле сулса йарса тӳлемеллине; е) ҫӗрйӗркеленӗ ҫухне пӗри аванлатнӑ ҫӗр тӗприне кайсан, ҫав аванлатнӑ ҫӗртен вӑл усӑ курса пӗтереймен пулсан, уншӑн камӑн, кама мӗн ҫул тӳлемеллине кӑтармалла.

192. Ҫӗрйӗркелекен уҫрештенисем ҫӗрйӗркелӳ пройектине ӗҫе кӗртнине тӗппипех ҫирӗплетнӗ хыҫҫӑн, ҫав ҫӗрсен кирлӗ токкумӗнҫӗсене тӑваҫҫӗ те, рекистратси тунӑ хыҫҫӑн, ҫӗрйӗркелеттерекенсене параҫҫӗ. Ҫав токкумӗнтсем ҫинҫе кашни усӑ курмалли ҫӗрсен ҫиккисене, вырӑнне, аслӑшне, йаҫӗсене, ҫӗрсене хӑҫҫан йӗркеленине, мӗн тӑрӑх (основание) тунине, ҫӗрпе усӑ куразсин условисене, тата ҫӗрйеркелӳ пройектине ҫирӗплетнин постановлени ҫинҫи кирлӗрех светӗнисене кӑтартмалла. Ҫӗрйӗркелӳ планӗсене, актисене, ҫак ӗҫ пирки ҫырнӑ хутсене ҫӗрйӗркелекен уҫрештенисенҫе усраҫҫӗ.

193. Ҫӗрйӗркелекен уҫрештенисемсӗр пуҫне тунӑ тӗрлӗ ҫӗрйӗркелӳн планӗсем, тата ытти хутсем, йе вӗсем шантарманнисем (неудостоверенные) вырӑнлӑ мар, ҫав плансем, хутсем тӑрӑх тунӑ ӗҫҫем саккунлӑ мар, вӑл йапаласем вӗсем саккулине кӑтартма пултарайmаҫҫӗ.

### II-мӗш уйрӑм.

## Ҫӗре рекистратси тӑвасси.

194. Ҫӗр рекистратсине ҫӗре пӗтӗм патшалӑх тӗлӗшӗпе тытса тӑрассин интгересӗшӗн, халӑх хуҫайствин тӗрлӗ йенӗсене кирлӗшӗн, ҫӗрпе усӑ куракансен правипе ирттересне сыхлашшӑн тӑваҫҫӗ; ҫакӑн пирки ҫӗрпе усӑ куракансенне пуринне те правӑпа хуҫайствӑ тӗлӗшӗнҫен вӑхӑтри тӗрӗс светӗнисене йӗркеллӗ пуҫтарса хурса усраҫҫӗ. Ҫӗр рекистратси ҫине кашни ҫӗр уҫаски ҫинҫен ҫапла светӗнисем кӗртеҫҫӗ: а) ҫӗр уҫаски хӑш вырӑнта, мӗн йатлӑ, унта пӗтӗмпе мӗн ҫул ҫӗр пур, тӗрлӗ ҫӗрсенҫе кашни мӗн ҫул, мӗлле ҫуртсем, хуҫайствӑн туйаннӑ йапалисем (кирлӗреххисем) пур; б) ҫӗрпе усӑ куракансем мӗн йатлӑ, тата ҫӗрпе усӑ куракансене ҫав уҫаскӑсене мӗн тӑрӑх панӑ; в) ҫав усӑ курса тӑракан ҫӗр тӗлӗшӗпе усӑ куракансем ҫине мӗлле полномоҫҫисем, повиннӑҫҫем хунӑ, тата г) малашне тухас хушусем рекистратси ҫине кӗртме хунӑ ытти светӗнисене.

195. Ҫӗр рекистратси икӗ тӗслӗ пулат: малтан рекистратси ӗҫӗ пуҫланса кайнӑ ҫухне карттӑсемпе рейестӑрсене ҫырса тултараҫҫӗ (ку тӗп рекистратси пулат), тата вӑхӑт иртнӗ майӗпе ҫӗр уҫаскисем правӑ йенҫен, хуҫайствӑпа природӑ йенҫен улшӑннине ҫӗр рекистратси актисем ҫине вӑхӑтра кӗртсе пыраҫҫӗ (ку йухӑм рекистратси).

196. Çĕр рекистратсине кашни вулăсăнне уйрăм туса тăраççĕ, çавăн ҫухне çак актăсене тăваççĕ: а) пĕтĕм вулăс карттине (планне); б) кашни йалăн карттине; в) вулăсри пур çĕрĕçлекенсен спискине (рейестăрне); г) вулăсри пур йалти кил вырăнĕсен рейестăрĕсене; д) вулăсри çĕр опҫисен рейестăрне.

197. Вулăсри пур çĕр уҫаскисене те рекистратси тумалла, рекистратси тумасăр нихăшне те хăвармалла мар; пĕрле усă курса тăмалли çĕре пĕр уҫаскă вырăнне хурса рекистратси тумалла, усă курса тăракансем çине уйăрса мар.

198. Кашни çĕр тĕлĕшĕнҫенех çаксене паллă тумалла: а) çĕрйĕркелекен уҫрештенисем çĕре йĕркелесси çинҫен тунă постановленийе, тата çĕрйĕркелӳ пройектине çирĕплетесси çинҫен тунă постановленйе; б) çĕре усă курма илнине; в) усă курма панă çĕре тытса тăрас правă пĕтессине; г) çĕр опҫи усă курса тăракан çĕр улшăннине, çĕнĕ килсем опҫăна айакран кĕнине, опҫăран тухнине; çĕр опҫисен уставĕсене, уставсем улшăннине; çĕр опҫисем çĕрпе усă курас йĕркене суйласа илнипе çав йĕркене улăштарни çинҫен тунă прикăвăрсене, çĕре валеçесси çинҫен, пĕринҫен çĕр кăларса теприне хушса пани çинҫен тунă прикăвăрсене; д) килсем уйăрлнине, килхуçисене улăштарнине, тара токăвăрĕсене; е) çĕрсем пирки тавлашусем тухнине, вĕсене çĕр комиççисем татса панине, ж) ҫикĕсем тунине, пăсса тунине, тата з) урăх актăсене те (малашнехи хушусем тăрăх рекистратси тумаллисене) кĕртмелле.

199. Çĕр рекистратсине Çĕрĕç Комиссариаҫĕпе унăн вырăнсенҫи оркăнĕсем туса тăраççĕ.

200. Рекистратси актисенҫи çветĕнисене тĕрĕс тумасан, тата çав актăсенҫен çырса панă хутсем (выпись) тĕрĕс пулмасан, çĕр рекистратси оркăнĕсем саккун умĕнҫе сăмах тытаççĕ; çав çветĕнисем тĕрĕс маррине çĕр тавлашăвесене татас йĕркепе пăхса тухса тĕрĕс маррине кăтартаҫҫен, вĕсене пур уҫрештенисен те, уйрăм çынсен те тĕрĕс вырăнне шутласа илмелле.

201. Çĕр рекистратси оркăнĕсен, ҫенттăрта та, вырăнсенҫе те çĕр пирки çырнă хутсем сыхласа усрамалли архивсем пулаççĕ; унта çав оркăнсем ыйтнипе çĕр ĕçĕ пирки çырнă хутсене, актисене, плансене, ĕлĕк тунисене пур уҫрештенисенҫен те йараççĕ, çĕрйĕркелекен уҫрештенисем çĕнĕ хутсене те, туса пĕтернĕ майĕпе, йарса тăраççĕ. Çĕр хуҫĕсен архивĕсенҫен тĕп хутсене (подлинники), актăсене, плансене çĕрйĕркелекен уҫрештенисемпе сут уҫрештенисем ыйтнă тăрăх анҫах памалла, кирлĕ вăхăт иртсенех вĕсене кайалла тавăрса памалла. Çĕр токкумĕнҫĕсем çухатнă ĕçлĕ çынсенҫен çав хутсене çĕнĕрен тăвас пирки тухнă тăкаксене атминистратси йĕркипе шырамалла.

202. Çĕр рекистратси тунă ҫухне çĕрпе усă куракан çынсемпе уҫрештенисен хăйсен аллинҫи çĕр токкумĕнҫĕсене кăтартмалла, тата рекистратсишĕн кирлĕ çветĕнисене памалла. Çавсене туманнисене штрав тумалла, тата рекистратси оркăнĕ çавăн пирки тунă тăкаксене тӳлеттермелле.

203. Çĕрйĕркелекен уҫрештенисен (çĕр комиççисен те) çĕрсем пирки хăйсем тунă постановленисене, суттуса татнисене, вĕсем саккун вăйне илнĕ хыççăн икĕ ернерен ытла вăхăт иртτермесĕр рекистратси оркăнĕсене рекистратси актисем çине çырса хума тăрăтмалла. Унтан вара рекистратси оркăнĕсен (вĕсем анҫах) пĕр тăхтамасăр çав ĕçе тутаракан çынсене памалла.

204. Йĕркелеме кирлĕ мар çĕрсене рекистратси тунă ҫухне вĕсен асăлăшне, унта мĕлле çĕрсем кĕнине, вĕсен ҫиккисене касăмласа хураççĕ, кирлĕ пулсан, мишавай паллисемпе паллă тăваççĕ, çавăн пирки вырăнсене çĕрйĕркелекен мишавайсене йараççĕ. Ҫикĕсене касăмланă ҫухне мишавай йенĕсене ҫĕнсе вĕсем тавлашусăр усă курса тăнă ҫикке пăхса тăвать, тавлашусăр усă курса тăнă ҫикĕ çук пулсан, йунашар çĕрсемпе усă куракансемпе

килĕштерсе тăваҫ, тавлашу пулсан—токкумĕнтсем тăрăх тăваҫ. Ђикĕрри мишавай паллисем пăсăлсан та, ҫухалсан та ҫав майпах ҫĕнетсе тăваççĕ.

Асăрхамалли. Йунашар ҫĕр опђисем хушшинђи ҫĕрсен тавлашуллă ђиккисене, кăтартма пултарайман йе кăтартса ҫитереймен пирки, касăмлама май килмесен, ҫав тавлашуллă ҫĕре вăл опђăсене, вĕсен ҫĕр мĕн ђул ҫителĕклине кура йатак тăрăх валеççе памалла.

205. Ҫĕр рекистратсине кама усăшăн тунă, вĕсенђен ҫавăншăн, тата ҫавăн пирки справккăсем, ҫветĕнисем, хутсем ҫырса илсе панăшăн тунă таксă тăрăх укҫа илеççĕ.

III-мĕш уйрăм.

## Ҫĕр пирки тухакан тавлашусене пăхса татса парасси.

206. Ҫĕр пирки пулакан тавлашусене татса пама вулăсри, уйесри, кĕпĕрнери ҫĕр комиҫҫисем пулаççĕ; ҫав комиҫҫисенђе ĕҫҫене васкаса тумалла.

207. Ҫĕр комиҫҫисем ҫĕрйĕркеленĕ ђух пулакан пур тавлашуллă ĕҫҫене, тата ҫĕрпе усă курас правă тĕлĕшĕнђен пулакан тавлашусене татса параççĕ; вăл тавлашусем ҫаксем: ҫĕрпе ушкăнăн йе пĕђђен усă курасси тĕлĕшĕнђен, опђăран ҫĕр кăларса панă, опђă ҫĕрне валеҫнĕ ђух, ҫĕрпе усă куракканнинђен пĕтĕм ҫĕре, йе пăртаккăшне сăккун кăтартнă майсенђе туртса илнĕ пирки, усă курса тăракан ҫĕрĕн аслăшне, ђиккине, вырăнне улăштарнă ђух (ҫĕрйĕркелӳ, мелиоратси, ҫулсем туни, патшалăхпа халăха кирлĕ ĕҫҫемшĕн ҫĕр илни, тата ыттисем те), кил уйрăлнă ђух ҫĕр тĕлĕшĕнђен пулакан тавлашусем, тата ҫĕр тĕлĕшĕнђен пулакан ытти тавлашусем те.

208. Ҫакăнта кăтартнă оркăнсенђен пуҫне вырăнсенђи нимле оркăнсем те ҫĕр тавлашусене татса пама хăйсем ҫине илме, вăл ĕҫҫене хутшăнма, тума тытăннă ĕҫе ђарма, тунă постановленисене улăштарма, вырăнсăра (пăрахăҫа) кăларма пултараймаççĕ.

209. Вулăсри ҫĕр комиҫҫисем вулĕҫтăвкомсем ҫумĕнђе пулаççĕ, унта ҫаксем кĕреççĕ: претҫетаттĕл, 2 ђлен; претҫетаттĕлĕ вулĕҫтăвком ђленĕнђен пулаҫ, ăна вулĕҫтăвком кĕртет, икĕ ђленне вулăсри канашсен пуххи суйласа кĕртет. Вĕсем ҫук ђухне вĕсен вырăнне пулма икĕ кăнтитат суйласа хураççĕ. Вулăсри ҫĕр комиҫҫинђи ђленсемпе вĕсен кăнтитаҫĕсене уйесри ĕҫтăвакан комиттет ҫирĕплетет.

Асăрхамалли. Ҫирĕплетме тăратнă кăнтитатсене иккĕмĕшĕнђе те ҫирĕплетмесен, уйесри ĕҫтăвакан комиттет вулăсри ҫĕр комиҫҫине хăй кĕртес тенĕ ҫынсене кĕртет.

210. Уйесрипе кĕпĕрнери ҫĕр комиҫҫисем уйесрипе кĕпĕрнери ҫĕр оркăнĕсем ҫумĕнђе пулаççĕ, унта претҫеттĕл, тата 2 ђлен пулаҫ: пĕри—ҫĕрйĕркелӳ пайĕн пуҫлăхĕ, тепри халăх сутйи.

211. Уйесрипе кĕпĕрнери ҫĕр комиҫҫисен претҫетгатĕлĕсемпе вĕсен йулташĕсене уйесрипе кĕпĕрнери ĕҫтăвакан комиттетсем суйласа кĕртеççĕ, ђленсемпе кăнтитаҫĕсене асăннă оркăнсем тăратаççĕ те, ҫав ĕҫтăвкомсемех ҫирĕплетеççĕ.

212. Ҫĕр комиҫҫинђи ђленсен пурин те хăйсен сут ĕҫĕсене тунă ђухне халăх сутйисен пек правă пур. Ҫĕр комиҫҫинђи суйласа кĕртекен ђленсене пĕр ҫуллăха суйлаççĕ.

213. Вулăсри ҫĕр комиҫҫисем вулăсра а) йалпа йал ҫĕрне, йе йал ҫĕрне йĕркеленĕ ђух пулакан тавлашусене, тата б) вулăсри ҫынсен, килсен, тата ҫĕр опђисен усă курмалли прави ҫинђен пулакан тавлашусене пăхаççĕ.

214. Уйесри ҫӗр комиҫҫи ҫапла ӗҫҫене пӑхса тӑрать: а) пӗрремӗш инстанси йӗркипе—вулӑспа вулӑс ҫӗрӗсене йӗркеленӗ ҫух тухакан тавлашусене, совхоссен, коллективла хуҫайствӑсен, претприаттисен, учрештенисен ҫӗрӗсене йӗркеленӗ ҫух тухакан тавлашусене, ҫӗр правк пирки тавлашакансе ҫен пӗр йенӗ патшалӑхпа халӑх учрештени пулсан, ҫавӑн пек тавлашусене б) иккӗмӗш инстанси йӗркипе—вулӑсри ҫӗр комиҫҫисем пӑхакан ӗҫҫене, вӗсем ҫине шалӑпӑ кӗртнӗ пулсан, пӑхса татса парать.

215. Кӗпӗрнери ҫӗр комиҫҫи а) пӗрремӗш инстанси йӗркипе—кӗпӗрнепе патшалӑх шутӗнҫе тӑракан учрештенисемпе; претприаттисемпе таврари халӑх хушшинҫе ҫӗрйӗркеленӗ ҫухне пулакан ӗҫсене, тата б) кассатси йӗркипе—уйесри ҫӗр комиҫҫисем пӑхакан ӗҫҫене пӑхса тӑрать.

216. Ҫӗр комиҫҫисенҫе ӗҫҫене пӑхса тухмалли йӗркене, вӗсен ҫленӗсене кӑларассине, йенсем претставиттӗлсем тӑратассине, ҫветиттӗлсене, пӗлекен ҫынсене ҫӗнессине, вӗсене ҫӳренӗшӗн укҫа тӳлессине, пымасан мӗн тумаллине, тата ыт. те, ҫавнашкал ӗҫҫене халӑх суҫӗсенҫе мӗлле правӗлсем тӑрӑх пӑхса тухмалла тунӑ, ҫав правӗлсем кӑтартаҫҫӗ.

217. Ҫӗр комиҫҫисем суттуса пани ҫинҫен шалӑпӑ памалла пулсан, ӑна ҫав суттуса панӑ ҫӗр комиҫҫи урлах. суттуни ҫинҫен пӗлтернӗ кунтан шутласа 2 ерне хушшинҫе парас пулать. Суттуса панӑ комиҫҫи вӑл шалӑпа ӗҫӗ мӗнӗпех, шалӑпӑ панӑ кунтан шутласа 2 ерне хушшинҫе, аслӑрах инстансине тӑрӑшать. Шалӑпӑ илменшӗн тата ӗҫе ҫас туманшӑн шалӑпӑ парас пулсан, тӳрех аслӑрах инстансине памалла.

218. Ҫӗр комиҫҫисем суттуса панине, ӑна тепӗр хут пӑхасси ҫинҫен, йе кассатси йӗркипе шалӑпӑ парас вӑхӑт тухмасӑр, ӗҫе кӗртме йурамасть. Ҫавӑн пек шалӑпӑсем парсан, суттуса панине ӗҫе кӗртме вӑл ӗҫе тӗппипех суттуса татиҫҫен, ҫаранса тӑрас пулать.

219. Шалӑпӑ памалли вӑхӑта каҫарма тивӗҫлӗ сӑлтавсем пирки иртерсе йанӑ пулсан, ӑна ҫӗнӗрен тутарасси ҫинҫен панӑ сайавленийа вӑл ӗҫе суттуса панӑ ҫӗр комиҫҫийех пӑхса тухать. Срока ҫӗнӗрен ҫӑстарасси ҫинҫен панӑ сайавленийа илменшӗн паракан шалӑпӑна ҫӗр комиҫҫисем суттуни ҫинҫен шалӑпӑ памалли йӗркепе парас пулать.

220. Кӗпӗрнери ҫӗр комиҫҫисем суттуса пани ҫинҫен панӑ кассатси шалӑписене ҫӗрӗҫ Комиссариаҫӗ Сут Комиссариаҫӗпе пӗрле ҫӗр пирки пулакан тавлашусен Аслӑ Кантролӗн Коллекинҫе (Особая Коллегия Высшего Контроля по земельным спорам) пӑхса тухать, тата ҫӗр пирки пулакан тавлашусен мӑн контролӗ те вӑлах. Коллеки претҫетаттӗлне, тата ытти 2 ҫленне Тӗпӗҫтӑвком Прӗҫитиумӗ ҫирӗплетет: претҫетаттӗлӗпе пӗр ҫленӗ Ҫӗрӗҫ Комиссариаҫӗ тӑратнӑ тӑрӑх кӗреҫҫӗ, иккӗмӗш ҫленӗ Сут Комиссариаҫӗ тӑратнӑ тӑрӑх кӗрет.

221. Ҫак уйрӑма ӗҫе кӗртесси тӗлӗшпе ҫӗр комиҫҫисем валли правӗлсем кӑларма Ҫӗрӗҫ Комиссариатне правӑ панӑ. Вӑл вӗсене Сут Комиссариаҫӗпе пӗр шутлӑ пулса тӑвать.

## IV-мӗш уйрӑм.

## Ҫӗнӗ ҫӗрсене куҫҫа ларасси.

222. Пӗр вырӑнтан тепӗр вырӑна куҫҫа ларасси, тата куҫҫа лармалли вырӑнсене курма ҫӳресси ирӗклӗ ӗҫ вӑл, тепле тӗлсенҫе анҫах кӗпӗрнери ҫӗр управленисем ӗҫ тӑратса Ҫӗрӗҫ Комиссариаҫӗ ҫирӗплетнӗ тӑрӑх ирӗксӗрлесе куҫарса лартма пултараҫҫӗ. Капла тӑвас пулсан куҫҫа ларакансене куҫҫа ларма, тата хуҫайствӑ ҫавӑрма патшалӑх хыснинҫен, йе вырӑнти хыснаран укҫа тенкӗ парас пулать, вара тин ирӗксӗрлесе куҫарса лартма пулать.

223. Раççей Хветератсийĕн Сотсиалисăмпа Канаш Республикĕнҫе куççа ларас ĕçе РХСКР-ĕн Çĕрĕç Комиссариаҫĕ пăхса тăрать. Вăл ĕç тăратнă тăрăх тĕрлĕ вырăнсене куççа ларас ĕçе Тĕпĕçтăвком уçать, ҫарассине те вăлах ҫарса лартать.

224. Куççа ларас ĕçе иртнĕ статьнара каланă пек пăхса тăрас йĕркене РХСКР-ĕн Çĕрĕç Комиссариаҫĕ çав ĕçе мĕлле тумаллине кăтартса, тĕрĕслесе тăрать, куççа лармаллин планне тăвать, куççа ларас текенсем валли саппас çĕр туса хатĕрлет, куççа ларакансене килтен тухас, çул çинҫе çӳрес, çĕнĕ вырăна вырнаçтарас ĕçе йĕркеллĕ тăвать, кусенҫен пуçне тата куççа ларас ĕççĕн укça тупса пама тăрăшать, ăна мĕлле условисемпе, йĕркепе парасси çинҫен правĕлсем кăларать.

225. Халĕ вăй пур ăрасна саккунлусем (узаконения) тăрăх, тата малашне те тухаканнисем тăрăх куççа ларакансене, вĕсем хушнă пирки, тунă йĕркепе куççа лараççĕ пулсан, патшалăхпа вырăнти повиннăççене (салтака кайасси, куланайсем, ĕçкуланайĕ, тата çавăн пеккисем) ҫăтас йенҫен çĕнĕ вырăнсенҫе вырнаçнă вăхăтра темиçе çул хушши çăмăллăх пулать: вĕсем вăл повиннăççенҫен темиçе çул хушши пĕтĕмпех, йе пăртак хăтăлаççĕ, кунтан пуçне тата çĕнĕ вырăнсене вырнаçнă ҫухне пулăшма вĕсене ытти çăмăллăхсем те пулаççĕ.

226. Ĕçлесе тăракан çĕрсем ĕçлекеннисене çывăхрах пултăр тесе халăха хăй пурăнакан вырăнта сапăтса лартмалла пулсан, куттăра тухмалла, пĕтĕк йалсем туса тухса лармалла пулсан, вĕсене çĕрйĕркелӳ йĕркипе тăваççĕ, вĕсем çĕрйĕркелӳ пройектисем çинҫе пулаççĕ, вăл ĕççене сапăнса ларакан çынсен, пĕрлешӳсен вăйĕпе тăваççĕ.

Асăрхамалли. Куççа, сапăна ларакансене вĕсем тухакан опҫăсем мĕлле йĕркепе, условисемпе пулăшмаллине ăрасна правĕлсем кăтартса параççĕ. Вăл правĕлсене Çĕрĕç Комиссариаҫĕ çавăнпа ĕç пур ветăмствăсемпе çураççа кăларать.

# ОКЛАВЛЕНИ.

Стр.

Пĕтĕм Раççейри Тĕпĕçтăвком Çĕр котексине ĕçе кĕртесси çинчен тунă постановлени . . . . . . . . . . . . 3

## Çĕр Котекси.

Тĕп йĕркесем . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 5

I-мĕш пай

## Çĕре ĕçлесе усă курасси.

Çĕрпе усă курмалли правă . . . . . . . . . . . . . . 6
Çĕре ĕçлеме тара парассипе илесси . . . . . . . . . . . 7
Харпăр хăй вăйĕпе çĕрĕçлесе тăракан хуçайствăсенче тара тытса ĕçлеттересси . . . . . . . . . . . . . . . 9

## Çĕр опчи.

Çĕр опчинче тăракансем . . . . . . . . . . . . . . —
Çĕр опчине тытса тăракан оркăнсем . . . . . . . . . . 10
Çĕр опчисен прависемпе вĕсем çине хунă ĕççем . . . . . 11

## Кил (çĕрĕçлесе тăракан хуçайствă).

Килре тăракансем . . . . . . . . . . . . . . . . . 12
Çĕрĕçлесе тăракан хуçайствăна уйăрасси . . . . . . . . —
Хуçайствăсем (килсем) вакланса кайассине чарасси . . . . 13

## Çĕрпе усă курмалли йĕркесем.

Тĕп йĕркесем . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 14
Çĕрпе халăхла йĕркепе усă курасси . . . . . . . . . . —
Çĕре учаскăн кастарса илес йĕрке . . . . . . . . . . 15
Çĕре йулташлăх йĕркипе ĕçлесе усă курасси . . . . . . 16
Çĕре халăхпа пĕрле ĕçлесси çинчен . . . . . . . . . . 17
Халăхла йĕркепе усă куракан опчăсенче çĕре валеçесси . . —
Кил вырăнĕ (плантă) çĕрĕсемпе çаранлăхсем . . . . . . . 18
Çĕре халăхран уйрăм кастарса илесси . . . . . . . . . 19
Ĕçлесе усă курмалли çĕрсене çирĕплетессипе йĕркелесси . . 20

II-мĕш пай.

## Хула çĕрĕсемпе патшалăх пурлăхĕн çĕрĕсем.

Хула çĕрĕсем . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 20

## Патшалăх пурлăхĕн çĕрĕсем.

Тĕп йĕркесем . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 21
Канаш хуçайствисем (совхоссем) . . . . . . . . . . . 22

III-мĕш пай.

## Çĕрйĕркелўпе çĕнĕ çĕрсене куçса ларасси.

Çĕрйĕркелў. Тĕп йĕркесем . . . . . . . . . . . . . 23
Çĕрйĕркелес пирки тухнă тăкаксене саплаасси çинчен . . . 25
Çĕрйĕркелў ĕçĕсене тăвас йĕрке . . . . . . . . . . . —
Çĕре рекистратси тăвасси . . . . . . . . . . . . . . 27
Çĕр пирки тухакан тавлашусене пăхса татса парасси . . . 29
Çĕнĕ çĕрсене куçса ларасси . . . . . . . . . . . . . 30